Ч 13 180 1

М. И. ЮРЬЕВ

ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ГРАММАТИКИ

IV-мĕш ПАЙĔ

ПУÇЛАМĔШ ШКУЛĂН ТĂВАТТĂМĔШ КЛАСĔ ВАЛЛИ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ▪ 1941

ПРОВЕРЩИЦА № 3

Просим при обнаружении дефекта в данной книге прислать ее для обмена с приложением этого талона — г. Чебоксары, Дом Печати, ул. Володарского, 5. Типография № 1 Управл. издательств и полиграфии.

Заводоуправление

М. И. ЮРЬЕВ

Н. А. Резюков редакципе

ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ГРАММАТИКИ

ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

ПУÇЛАМĂШ ШКУЛĂН
4-МĔШ КЛАСĔ ВАЛЛИ

Тӳрлетсе хушса кăларнă 3-мĕш издани
Чăваш АССР Çутĕç халăх комиссариачĕ çирĕплетнĕ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР * 1941

1 §. Предложенипе унӑн членӗсем.

1-мӗш задача. Ҫак статьяна вуласа тухӑр, унтан ӑна ҫырса илӗр. Кашни предложенире подлежащие аялтан пӗр йӗрпе туртса паллӑ тӑвӑр.

Ҫӗр иртрӗ. Хаваслӑ ир ҫитрӗ. Вӗҫен кайӑксем вӑранчӗҫ. Вӗсем хӗвел ҫуттипе савӑнаҫҫӗ. Кӑсиясем чӗвӗлтетеҫҫӗ. Аякра куккук авӑтать. Пакша пӗр йывӑҫ ҫинчен тепӗр йывӑҫ ҫине ҫивӗччӗн сикет. Пӗтӗм вӑрман чӗрӗлчӗ.

2-мӗш задача. Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Кашни предложенирех подлежащипе ӑна ӑнлантарса паракан сӑмахсене сказуемӑйран тата ӑна ӑнлантарса паракан сӑмахсенчен икӗ йӗрпе (||) уйӑрӑр.

Тӗслӗх: *Хирти тырӑ || ӑнӑҫлӑ ӳсет.*

Хирти тырӑ ӑнӑҫлӑ ӳсет. Тулли пучахсем ылттӑнӑн йӑлтӑртатаҫҫӗ. Ӗҫчен колхозниксем тырӑ вырма хатӗрленеҫҫӗ. Маттур комбайнерсем тырӑ пӗрчи хытасса кӗтеҫҫӗ. Хурҫӑ жнейкӑсем хатӗрех тӑраҫҫӗ.

3-мĕш задача. Çак предложенисенчи сăмахсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнса тăнине чертеж туса кăтартăр.

Çутă шыв лăпкăн юхать. Кăтра хăвасем хумханмасăр ларaççĕ. Ватă йăмрасем шыв еннелле тайăлнă. Çамрăк ачасем вăлтапа пулă тытаççĕ. Сарă хĕвел хăйĕн çуттипе тĕнчене савăнтарать.

Т ĕ с л ĕ х с е м:



Подлежащипе сказуемое предложение йĕркелесе майлаштараççĕ, çавăнпа вĕсене т ĕ п ч л е н с е м теççĕ.

Подлежащипе сказуемăя ăнлантаракан сăмахсене к ĕ ç ĕ н ч л е н с е м теççĕ.

4-мĕш задача. Подлежащипе сказуемăйран анчах пулса тăракан предложенисене хăвăр кĕçĕн членсем тупса хушса анлăлатăр та çырса парăр. Предложенири шухăш улшăннине асăрхăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Урока кĕме звонок пулчĕ.*

Звонок пулчĕ. Урок пуçланчĕ. Учитель каласа парать. Ачасем итлеççĕ. Учитель ыйтать. Ачасем калаççĕ. Урок пĕтрĕ. Учитель кăйрĕ. Ачасем тухрĕç.

5-мĕш задача. Çак предложенисенчен подлежащисемпе сказуемăйсене çеç çырса илĕр. Предложенири шухăш мĕнле улшăннине асăрхăр.

Эпир вăрмана кăмпа татма кайрăмăр. Кăмпи питĕ нумай шăтнă. Шурă кăрăçсем йăви-йăвипе лараççĕ. Пĕр уçланкăра эпир мулкач куртăмăр. Анчах вăл пире çывăха та ямарĕ. Пире курсанах, вăл чăтлăха тарса пытанчĕ.

Предложени подлежащипе сказуемăйран анчах пулсан, ун пек предложение а н с ă р п р е д л о ж е н и теççĕ.

Предложенире подлежащипе сказуемăйран пуçне кĕçĕн членсем те пулсан, ун пек предложение а н л ă п р е д л о ж е н и теççĕ.

Анлă предложени шухăша анлăрах, уççăнрах кăтартать.

6-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илĕр, анлă предложенисене аялтан пĕр йĕр туртса паллă тăвăр.

Эпир таса пӳлĕме пырса кĕтĕмĕр. Чечексем лараççĕ. Портретсем çакăнса тăраççĕ. Кĕтесре пионер отрячĕн хĕрлĕ ялавĕ тăрать.

Ачасем пухăнса çитрĕç. Пурте шăпланчĕç. Пурте сĕтелсем хушшине вырнаçса ларчĕç. Сбор пуçланчĕ. Чи малтанах отряд вожатăйĕ сăмах илчĕ. Вăл аслă Сталин атте çинчен каласа пачĕ. Ачасем ăна питĕ тимлĕн итлесе ларчĕç.

7-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илĕр. Подлежащисене ăнлантаракан кĕçĕн членсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Сарă хĕвел пăхать. 2. Вăйлă çил вĕрет. 3. Хура вăрман кашлать. 4. Симĕс калча хумханать. 5. Çеçенхир ешерет. 6. Çутă шыв юхать. 7. Хирте путене авăтать.

8-мĕш задача. Çак предложенисене вуласа тухăр. Сказуемăйсене ăнлантаракан кĕçĕн членсене кăтартса парăр.

Эпир экскурсирен таврăнатпăр. Сасартăк çумăр пĕрĕхме тытăнчĕ. Эпир васкаса утатпăр. Çумăр пире йĕпетет. Эпир

чупатпӑр. Ҫывӑхрах пысӑк хыр ларать. Эпир хыр айне пырса тӑтӑмӑр.

Ҫумӑр часах иртрӗ. Эпир васкамасӑрах яла ҫитрӗмӗр.

9-мӗш задача. Ҫак статьяна вуласа тухӑр. Паллӑ тунӑ сӑмахсем мӗнле членсене ӑнлантарса панине асӑрхӑр.

Эпир **телейлӗ** ҫӗршывра пурӑнатпӑр. **Пирӗн телейлӗ** ҫӗршывра ҫеҫ ӗҫсыннисем **ирӗклӗ** пурӑнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. **Капитализмлӑ** ҫӗршывсенче капиталистсем ӗҫсыннисене пусмӑрлаҫҫӗ.

Совет ҫӗршывӗнче пусмӑр ҫук. Пӗтӗм власть рабочисемпе хресченсен аллинче.

Ҫакӑнта паллӑ тунӑ: **телейлӗ, пирӗн, ирӗклӗ, капитализмлӑ, совет** сӑмахсем подлежащие е сказуемӑя мар, хӑйсем хыҫӗнче тӑракан кӗҫӗн членсене ӑнлантарса параҫҫӗ.

Анлӑ предложенире подлежащие е сказуемӑя ӑнлантаракан кӗҫӗн членсем анчах мар, кӗҫӗн членсене ӑнлантаракан кӗҫӗн членсем те пулма пултараҫҫӗ. Кун пек анлӑ предложенисем шухӑша тата уҫҫӑнрах кӑтартаҫҫӗ.

10-мӗш задача. Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Кӗҫӗн членсене ӑнлантаракан кӗҫӗн членсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Сӗм вӑрманта тискер кайӑксем пурӑнаҫҫӗ. 2. Ешӗл улӑхра кӗтӳ ҫӳрет. 3. Тарӑн кӳлӗре пулӑсем ишеҫҫӗ. 4. Ҫывӑхри вӑрманта кӑмпасем шӑтнӑ. 5. Ӑшӑ ҫӗршывсенче ӳсентӑрансем питӗ йышлӑ ӳсеҫҫӗ. 6. Аякри ҫурҫӗрте ӳсентӑрансем сахал. 7. Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче ҫӗр айӗнчи пурлӑх нумай. 8. Пирӗн аслӑ ҫӗршывра темӗн тӗрлӗ пуянлӑх та пур.

2 §. Калуллӑ, ыйтуллӑ тата кӑшкӑруллӑ предложенисем.

11-мӗш задача. Ҫак сӑвва вуласа тухӑр. Ыйту пур предложенисене тата ыйту ҫук предложенисене кӑтартса парӑр.

Ленин

Вут ҫулӑмӗ пек
чӗлхӳ-ҫӑвару
епле сивӗнсе
чӗнми пулчӗ-ши?

Тӗттӗм пуҫлӑхӗ—
хӑрушӑ вилӗм
епле сан патна
хӑйса пычӗ-ши?

Тулли уйӑх пек
ҫут сӑн-сӑпату
мӗншӗн хӑвӑртах
тӗксӗмленчӗ-ши?

Пурне те курса
тăракан куçу
епле хупăнса
тĕттĕмленчĕ-ши?

Пĕтĕм çĕр çинчи
ĕçхалăхĕшĕн
сан ят чăн-чăнах
чăн та çут çăлтăр—

Хĕвел çутти пек
çутă ят пултăр,
яланах манми
çуталса тăтăр.

12-мĕш задача. Çак статьяри ыйтусене тата вĕсене хирĕç панă ответсене çырса илĕр. Ыйтусемпе ответсене мăшăрăн-мăшăрăн вуласа тухăр. Ыйтăва мĕнле сасăпа вуларăр? Ответа мĕнле сасăпа вуларăр? Ыйту пур предложени вĕçĕнче мĕнле чарăну палли ларать? Ыйту çук предложени вĕçĕнче мĕнле чарăну палли ларать?

— Ĕлĕк ĕççыннисен пурăнăçĕ мĕнле пулнă-ха?

— Калама çук йывăр, хĕн-хурлă пулнă. Патша улпучĕсем, капиталистсем, кулаксем, пупсем ĕçхалăхне пусмăрласа пурăннă.

— Ялта ĕлĕк камсем пуç пулса пурăннă?

— Кулаксем, пупсем, чиновниксем, ĕçхалăх юнне-тарне юхтаракансем.

— Çав хĕн-хурлă ирсĕр пурăнăçран пире кам хăтарчĕ?

— Большевиксен партийĕ, унăн çулпуçĕсем Ленинпа Сталин, вĕсем ертсе пынипе пулнă Октябрь революцийĕ хăтарчĕ.

Предложенире мĕн çинчен те пулин каласа çеç пĕлтереççĕ пулсан, ун пек предложение калуллă предложени теççĕ.

Предложенире ыйту пулсан, ун пек предложение ыйтуллă предложени теççĕ.

Ыйтуллă предложенире *кам? мĕн? ăçта? мĕнле? епле? хăçан?* т. ыт. ыйту сăмахĕсем е *и*, *ши*, *ха* ыйту татăкĕсем пулма пултараççĕ.

Ыйтуллă предложени вĕçĕнче сасă çӳлелле хăпарать, калуллă предложени вĕçĕнче сасă анать.

Ыйтуллă предложени вĕçне ыйту палли, калуллă предложени вĕçне точка лартаççĕ.

13-мӗш задача. Çак сыпăка çырса илӗр, кирлӗ чарăну паллисем (точка е ыйту палли) лартса тухăр.

— Эсӗ шофер-и
— Çук, летчик
— Ăçта ӗçлетӗн
— Мускавра
— Яла мӗнле майпа килтӗн
— Отпуска ячӗç, канма килтӗм
— Ялта нумай пурăнмалла-и
— Пӗр уйăх

14-мӗш задача. Çак сăвва вуласа тухăр. Ăçта мӗнле чарăну палли лартмаллине кăтартса парăр.

Манăн парне

Хӗвелӗ хӗртет,
чуна илӗртет
Часах ӗнтӗ ак
май уявӗ çитет

Аслă уява
мӗнле кӗтем-ши
Мӗнле парнесем
ăна кӳрем-ши

Мӗнле чыс тăвас
сана, чаплă Май
Мӗнпе кăмăллас
çулла çитнӗ май

Сан валли парне
манăн пӗрре çеç —
лайăх вӗренсе
грамота илес

15-мӗш задача. Çак сăвва вуласа тухăр. Предложенисем вӗçӗнчи кăшкăру паллисем мӗне пӗлтернине асăрхăр.

Вăйă

Сарăлса выртать çырма,
ик енче те хурама.
Шыв çинче—пăртан кӗпер.
Хӗллехи кун пит чипер:
ачасене вылямa,
вырăн ирӗк савăнма.
Анчӗç, анчӗç ачисем...
Эх, вӗсенӗн сассисем!
Пит те уçă, пит хавас
янăрать ушкăнлă сас.

— Эй, колхозăн ачисем,
пурте килӗр, çамрăксем!
Килӗр, килӗр, ярăнар!
Йышлăн пӗрле савăнар!
Хӗрӗ-ывăлӗ пӗрле
çутă уйăхлă çӗрле,
алла-аллăн тытăнса,
малалла утса, чупса,
ушкăнпа пӗрле выляр!
Çирӗп сывлăхлă пулар!

Предложени ӑна калаканӑн кӑмӑлне (савӑннине, хӗпӗртенине, тӗлӗннине, чӗннине т. ыт. те) кӑтартма пултарать.

Ун пек предложение кӑшкӑруллӑ предложени теççӗ.

Кӑшкӑруллӑ предложение сасса вӑйлатса калаççӗ.

Кӑшкӑруллӑ предложени вӗçне кӑшкӑру палли лартаççӗ.

16-мӗш задача. Çак калава вуласа тухӑр. Калаври ыйтуллӑ, кӑшкӑруллӑ предложенисене çырса илӗр. Ыйтуллӑ предложенисене вуланӑ чух, сасӑ мӗнле улшӑннине асӑрхӑр.

Пӗр старикӗн виçӗ ывӑл пулнӑ. Аслӑ ывӑлӗ моряк пулнӑ, вӑталӑх ывӑлӗ аэроплан çинче вӗçме вӗреннӗ, кӗçӗнни пограничник пулнӑ.

Аслӑ ывӑлӗ киле герой пулса таврӑннӑ. Вӑл паха тумпала, лентӑллӑ картуссем тӑхӑнса килнине курсан, унӑн ашшӗпе амӑшӗ çав тери хытӑ хӗпӗртенӗ. Çавна курса, ашшӗпе амӑшӗ ӑна çапла каланӑ:

— Эх, ывӑлӑм, эсӗ килтӗн-ха, ыттисем хӑçан килӗç-ши?—тенӗ.

Аэроплан çинче вӗçме вӗренни те часах таврӑннӑ. Вӑл та, аслӑ ывӑлӗ пекех, çав тери чаплӑ, паха тумланнӑ: пиншакӗ те, çӗлӗкӗ те унӑн сӑрантан çӗленӗскерсем пулнӑ. Ашшӗпе амӑшӗ каллех çав тери хытӑ хӗпӗртенӗ. Вӗсем каллех çапла каланӑ:

— Эх, ывӑлӑмсем, эсир килтӗр-ха ӗнтӗ, кӗçӗнни хӑçан çитӗ-ши?—тенӗ.

Юлашкинчен виççӗмӗш ывӑлӗ те таврӑннӑ.

Нумай та пурӑнман, хайхи виçӗ тӑван, виçӗ паттӑр каллех Мускава, аслӑ Сталин патне кайма шухӑшланӑ.

Вӗсем пӗр-пӗрне каланӑ:

— Айтӑр, виççӗмӗр те каяр!—тенӗ.

Ашшӗпе амӑшӗ, вӗсен ывӑлӗсем Мускава кайма шут тытнине пӗлсен, ывӑлӗсене çапла тархасласа ыйтнӑ:

— Эсир хӑть кӗçӗн ывӑлӑмӑра, Якура, хӑварсамӑрччӗ киле!—тенӗ.

— Çук!—тенӗ Якур.—Эпӗ вӗсенчен юлмастӑп. Манӑн аслӑ Сталин патне кайса курмаллах.

Виççӗшӗ те вара аэроплан çине ларнӑ та Мускава вӗçтернӗ.

17-мӗш задача. Çак кӗске калава çырса илӗр. Кирлӗ вырӑна ыйту палли е точка лартӑр.

Ик ача кӗнеке магазинӗ умӗнче пулнӑ. Вӗсем иккӗшӗ те пӗрне пӗри хытӑ тинкерсе пӑхнӑ. Иккӗшӗн те мӑйӗсенче хӗрлӗ галстуксем пулнӑ.

Тӑрсан-тӑрсан, пӗри тепринчен çапла ыйтать:

— Эсӗ хӑш шкултан

— Шетмӗ шкулӗнчен

Кун хыççӑн пӗр-пӗрин ӗçӗсем çинчен ыйтса пӗлме тытӑнаççӗ:

— Хӑш класра вӗренетӗн

— Тӑваттӑмӗшӗнче

— Хӑш отрядра

— Иккӗмӗшӗнче

— Сирӗн класра ачасем нумай-и

— Нумай

— Миçе

— Вӑтӑр пиллӗк

18-мӗш задача. Çакӑнти ответсем тӑрӑх ыйтуллӑ предложенисем туса çырӑр.

— . . . .

— Петя.

— . . . .

— Вуниккӗре.

— . . . .

— Пионерта тӑратӑп.

— . . . .

— Отлично.

— . . . .

— Пирӗн учитель Емельян Егорович ятлӑ.

— . . . .

— Лайӑх вӗрентет, пире, ачасене, юратать.

19-мӗш задача. Хӑвӑр класри ачасен пурӑнӑçӗпе вӗсен ӗçӗсем çинчен ыйтусем çырӑр: класра миçе ача вӗренни çинчен, мӗнле вӗренни çинчен, отряд мӗнле ӗçлени çинчен, звено вожатӑйӗсем мӗн туни çинчен, хаçат-журналсем тухса тӑни çинчен, экскурсисене кайни çинчен т. ыт. çинчен те.

20-мӗш задача. Çак статьясене вуласа тухăр. Уҥта лартнă кăшкăру паллисем мӗне пӗлтернине каласа парăр.

Виçӗ паттăр

Старик çӳлелле пăхать те аэроплан вӗсен ялӗ çинеллех кӗрлеттерсе вӗçсе килнине курать. Шăп вӗсен ялӗ тӗлне çитсен, хайхи аэроплан пӗлӗт çинче ик-виç хутчен чӗкеç пек вӗçсе выляса çавăрăнать. Унтан вăл ял çинелле шурă хут листисем пăрахма тытăнать. Кашни хучӗ çинчех: „Сывă пултăр аслă Сталин!"—тесе çырнă.

— Унтан старик хайхи аэроплан шăп ял вӗçӗнчи симӗс çерем çине вӗçсе аннине курать.

Пӗтӗм ял çынни аэроплан курма тухнă. Аэроплан ăшӗнчен карчăкпа старикӗн виç ывăлӗ те хавассăн сиксе аннă. Курма пынă колхозниксем пӗтӗмпех тӗлӗнеççӗ. Старикпе карчăка çаппа калаççӗ:

— Мучи, мучи, сирӗн ачасем килчӗç!

— Кинеми, сирӗн ачасем çитрӗç!—теççӗ.

Виçӗ паттăр, виçӗ тăван вată ашшӗпе амăшне ыталаса чуптăваççӗ:

Виçӗ тăван ячӗпе „Ленин" колхоз членӗсем чаплă уяв туса ирттереççӗ.

Кăмпара

Вăрманта шăпах. Коляпа Ваня кăмпа пуçтарса çӳреççӗ. Вӗсем пӗр уçланка тухнă та калаçса лараççӗ. Шăп çав вăхăтра пӗр тӗм хыçӗнче темскер шатăрт! тутарни илтӗнет.

— Ай!—тесе кăшкăрса ярать Коля.

Унччен те пулмарӗ, пӗр мулкач сикет-тухать. Вăл, ачасене курсанах, вăрман ăшне чалт! тапса сикет.

— Эй, шеремет мулкачӗ! Ялт! анчах курăнчӗ! Лайăххăн курса та юлаймарăмăр!—терӗç савăннипе вӗсем.

21-мӗш задача. Çак калава çырса илӗр. Кирлӗ çӗре чарăну паллисем лартса тухăр.

Пограничник

Пограничник çӗр çумне лăпчăнса выртнă Вăл малалла хытă тинкерсе пăхать Чикӗ урлă каçакан шпион та çӗр çумне тăсăлса выртнă Вăл хăлхине çӗр çумне тытса темӗскер хăтланать

Вăхăт ерипенех шуса пынă Шпион ура çине тăчӗ Пăртак тăрсан вăл тӗм патнелле утрӗ

Вăл темĕн тултарнă миххине илет те кимĕ патнелле тĕмсем хыçĕпе йăтса каять Хăй питĕ асăрханса хуллен утать

Çав вăхăтрах пограничник ура çине сиксе тăрать Вăл чикĕ урлă каçакана курса, хаяррăн кăшкăрса ярать

— Стой

Миххи ӳкет Палламан çын каялла çавăрăнса пăхать Красноармеец хăй аллинчи винтовкипе нарушитель кăкăрĕ çинелле тĕллет

— Ан хускал Шăп тăр Кам пултăр эсир Мĕн тума килтĕр кунта

Лешĕ нимĕн калама аптăранă Пограничник ăна заставăна илсе кайнă

3 §. Темиçе подлежащиллĕ, темиçе сказуемăйлă, темиçе пĕрйышши кĕçĕн членлă предложенисем

22-мĕш задача. Çак предложенисенче кашнинче миçешер подлежащее? Çав предложенисем хушшине мĕнле паллăсем лартнă?

1. Шупашкарта вырăссем, чăвашсем, тутарсем, мордвасем марисем, украинецсем пурăнаççĕ. 2. Пирĕн шкулта комсомолецсем, пионерсем, октябреноксем вĕренеççĕ. 3. Манăн пеналта ручка, карандаш, перо, ластик тата циркуль пур. 4. Шыв тата сывлăш—этеме питĕ кирлĕ япаласем. 5. Вăрман та, хир те чĕрĕлчĕ.

Предложенире темиçе подлежащее пулма пултарать. Çавăн пек предложение вуланă чухне кашни подлежащее хыççăн пĕчĕк чарăну пулать, çырура ун пек подлежащисене пĕр-пĕринчен запятайăпа уйăраççĕ.

Юлашки подлежащее умĕнче *тата* е *та, те* союз пулсан, ун умне запятая лартмаççĕ. Анчах *та, те* союз кашни подлежащее хыççăнах пулсан, подлежащисем хушшине запятайăсем лартаççĕ.

Шăнкăрчăсем тата чĕкеçсем вĕçсе кайрĕç.



Шăнкăрчăсем, чĕкеçсем, тăрисем вĕçсе кайрĕç.



23-мӗш задача. Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Кашни предложенирех пур подлежащисене те аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр, кирлӗ ҫӗре запятая лартӑр.

1. Митинга ваттисем ҫамрӑксем тата ачасем те пухӑнчӗҫ. Арҫынсем те хӗрарӑмсем те пӗчӗк ачасем те таса, чӑн-чӑн уяври пек тумланса пынӑ.

2. Хӗвел шыв уҫӑ сывлӑш пирӗн сывлӑха сыхлать. Колхоз хирӗнче тулӑ ыраш сӗлӗ пӑрҫа ӳсет. Юман ҫӑка вӗрене хыр чӑрӑш вӑрманта ӳсет.

3. Йывӑҫсем тата курӑксем сарӑлчӗҫ. 4. Карас ҫӑрттан тата ҫупах шывра пурӑнаҫҫӗ. 5. Кашкӑр тата тилӗ те мулкач та— вӑрманта пурӑнакан тискер кайӑксем.

24-мӗш задача. Ҫак предложенисенче миҫе сказуемое? Ҫав сказуемӑйсем хушшине мӗнле паллӑсем лартнӑ?

1. Эпир шкулта вулатпӑр, ҫыратпӑр, шутлатпӑр. 2. Вечерсенче вылятпӑр, ташлатпӑр тата юрлатпӑр. 3. Хальхи танксем вӗҫеҫҫӗ, чупаҫҫӗ, ишеҫҫӗ. 4. Комбайн вырать те, ҫапать те, сӑвӑрать те.

Предложенире темиҫе сказуемое пулма пултарать. Ҫавӑн пек предложение вуланӑ чухне кашни сказуемое хыҫҫӑн пӗчӗк чарӑну пулать, ҫырура ун пек сказуемӑйсене пӗр-пӗринчен запятайӑпа уйӑраҫҫӗ.

Юлашки сказуемое умӗнче *тата* е *та, те е* союз тӑрать пулсан, ун умне запятая лартмаҫҫӗ. Анчах *та, те* союз кашни сказуемое хыҫҫӑнах пулсан, сказуемӑйсем хушшине запятайӑсем лартаҫҫӗ.

Комбайн вырать тата ҫапать. Комбайн вырать, ҫапать тата сӑвӑрать.





25-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илĕр. Сказуемăйсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Тыръ шăтрĕ, ӳсрĕ, пулса çитрĕ. Эпир тырра выртăмăр, çапрăмăр, сăвăртăмăр та кĕлете хутăмăр. Хамăртан ытлашши тырра государствăна патăмăр. Тырра алларăмăр та армана леçрĕмĕр. Çил тухрĕ, вăйланчĕ, арман çуначĕсене çавăрчĕ, çăнăх авăртма пулăшрĕ.

26-мĕш задача. Çак предложенисенче пĕрйышши кĕçĕн членсем миçе? Çав кĕçĕн членсен хушшине мĕнле паллă лартнă?

1. Пирĕн колхозра хура, кăвак, çӳрен, ула, хăла тихасем çитĕнеççĕ. 2. Эпир картинăна сарă, симĕс, хĕрлĕ тата кĕрен сăрăсемпе ӳкеретпĕр. 3. Çĕре тислĕкпе те, минерал çăнăхĕсемпе те çĕнетеççĕ.

---

1. Предложенире темиçе пĕрйышши кĕçĕн член пулма пултарать. Вуланă чухне кашни пĕрйышши член хыççăн пĕчĕк чарăну пулать; çырура вĕсене пĕр-пĕринчен запятайăпа уйăраççĕ.

Колхозниксем хире тулă, ыраш, сĕлĕ, пăрçа акаççĕ.

2. Юлашки кĕçĕн член умĕнче союз пулсан, ун умне запятая лартмаççĕ.

Колхозниксем хире тулă, ыраш, сĕлĕ тата пăрçа акаççĕ.

Анчах союз кашни пĕрйышши кĕçĕн член хыççăнах пулсан, кĕçĕн членсем хушшине запятайăсем лартаççĕ.

Колхозниксем хире тулă та, ыраш та, сĕлĕ те, пăрçа та акаççĕ.

27-мĕш задача. Çакăнти пĕр ыйтуллă сăмахсене кăтартса тухăр. Вĕсем предложенире мĕнле член пулнине, вĕсене пĕр-пĕринчен мĕнле паллăпа уйăрса çырнине асăрхăр.

1. Пионер кĕтесĕнче ялав, горн, барабан пур. 2. Вăрманта хыр, юман, йĕлме, шĕшкĕ, кăпчанкă ӳсет. 3. Хула ял валли трактор, комбайн, грузовик, çитец тата тĕрлĕ таварсем парать. Ял хула валли тырă, тĕрлĕ çимĕçсем парать.

28-мĕш задача. Çак ыйтусем çине ответсем çырса парăр. Пĕрйышши членсем хушшине запятая лартăр.

Колхоз хирĕнче мĕнле тырăсем пулаççĕ? Чечексем мĕн-мĕн тĕслисем пулаççĕ? Сирĕн вăрманта мĕн ятлă йывăççем ӳсеççĕ? Столярсем мĕн-мĕн тăваççĕ? Комбайн мĕн-мĕн тăвать? Сирĕн отрядра мĕн-мĕн ятлă звеносем пур? Сирĕн звенора мĕн-мĕн ятлă ачасем пур?

29-мӗш задача. Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Пӗрйышши членсене аялтан туртӑр, вӗсем мӗнле член пулнине асӑрхӑр, хушшисене запятайӑсем лартӑр.

Пирӗн шкулта переменӑсем вӑхӑтӗнче час-часах вӑйӑ-кулӑ ташӑ-юрӑ пулать. Маша Яша Петя Ваня отлично вӗренеҫҫӗ. Колхозниксем йӗтем ҫинче ҫапаҫҫӗ тасатаҫҫӗ сортлаҫҫӗ. Ачасем шкулта перопа грифельпе карандашпа ҫыраҫҫӗ.

> **Предложенире темиҫе подлежащее, темиҫе сказуемое е темиҫе пӗрйышши кӗҫӗн членсем пулсан, ун пек предложение пӗрйышши членлӑ предложени теҫҫӗ.**
>
> **Пӗрйышши членсем хисеплесе тухнине кӑтартаҫҫӗ.**
>
> **Пӗрйышши членсене *тата, та, те, е* союзсемпе ҫыхӑнтарма пултараҫҫӗ.**

30-мӗш задача. Ҫак калаври предложенисенче мӗншӗн запятайӑсем лартнине ӑнлантарса парӑр.

Пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар.

Пирӗн Хӗрлӗ Ҫар паттӑр, вӑйлӑ. Вӑл совет халӑхӗ ҫӗнтерсе илнӗ ирӗкшӗн, никама та пӑхӑнса тӑрас марришӗн, рабочисемпе хресченсен влаҫӗшӗн, социализмшӑн кӗрешнипе таччӑн ҫыхӑнса тӑрать.

Тӗнчери пролетариатӑн аслӑ ҫулпуҫӗсем—Ленинпа Сталин юлташсем—пирӗн Хӗрлӗ Ҫара пӑхса ҫитӗнтернӗ, унӑн паттӑр ӗҫӗнче яланах хӑйсем хутшӑнса ӗҫленӗ, татӑклӑ кӑтартусем парса тӑнӑ.

Пирӗн Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар флотӗнчи руководительсем, командирсем, красноармеецсем, краснофлотецсем—рабочисемпе хресченсен ывӑлӗсем, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн пӗр тумлам юн юлмиччен кӗрешме хатӗр. „Эпир миршӗн тӑратпӑр, мир ӗҫӗшӗн ӗҫлетпӗр. Анчах пире юнанисенчен эпир хӑрамастпӑр, вӑрҫа чӗртсе яракансем ҫапни ҫине ҫапнипех ответ пама хатӗр тӑратпӑр". (*И. Сталин*).

Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар флочӗ юлашки вӑхӑтра ҫӗнтерӳллӗ социализмлӑ геройла историйӗ ҫине тӗлӗнмелле чаплӑ, ҫӗнӗ страницӑсем ҫырса хучӗҫ. 1938-мӗш ҫулта пирӗн паттӑр, мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар социализмлӑ тӑван ҫӗршыва Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчен тапӑнакан японецсене Хасан кӳлли патӗнче ҫапса салатрӗ. 1939-мӗш ҫулӑн вӗҫӗнче Хӗрлӗ Ҫар Польша панӗсем пусмӑрласа пурӑннӑ Хӗвеланӑҫ Украинӑпа Хӗвеланӑҫ Белоруссири ӗҫҫынни-сене ӗмӗрлӗхех ирӗке кӑларчӗ.

Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар флочӗн боецӗсем 1940-мӗш ҫулта белофинсене хирӗҫ пынӑ кӗрешӳ фронтӗнче те калама ҫук пысӑк героизм кӑтартрӗҫ. Ҫак кӗрешӳ вӑл совет хӗҫпӑшалӗ, советӑн мирлӑ политики ҫӗнтернипе вӗҫленчӗ.

31-мӗш задача. Ҫак предложенисенче многоточи вырӑнне кирлӗ сӑмахсем ҫырса парӑр, вӗсем мӗнле член пулнине асӑрхӑр. Кирлӗ ҫӗре запятайӑсем лартӑр.

Тӗслӗх: *Вӑрманта ӑвӑс, юман, ҫӑка, хурӑн ӳсет.*

1. Пирӗн класра Захар Петя... ятлӑ ачасем вӗренеҫҫӗ. 2. Вӑрманта ӑвӑс юман... ӳсет. 3. Колхоз садӗнче улмуҫҫисем сливӑсем... ҫитӗнеҫҫӗ. 4. Шкулта ачасем ҫыраҫҫӗ вулаҫҫӗ... 5. Эпир ҫулла вӑрмана хире... каятпӑр. 6. Шкул директорӗ пирӗн валли хуларан кӗнекесем ручкӑсем... илсе килчӗ. 7. Чечексем хӗрлӗ сарӑ... тӗслисем пулаҫҫӗ.

32-мӗш задача. Ҫакӑнти сылтӑм енчи предложенисем варрине двоеточи мӗншӗн лартнине, вӑл предложенисенче сасӑ мӗнле улшӑннине асӑрхӑр.

1. Пирӗн вӑрманта ҫӑка, вӗрене, хыр, хурӑн, йӗлме, пилеш йывӑҫӗсем ӳсеҫҫӗ.

1. Вӑрманта ҫакӑн пек йывӑҫсем ӳсеҫҫӗ: ҫӑка, вӗрене, хыр, хурӑн, йӗлме, пилеш.

2. Заводра та, фабрикӑра та, колхозра та, шахтӑра та стахановецсен йышӗ ӳссех пырать.

2. Стахановецсен йышӗ пур ҫӗрте те ӳссе пырать: заводра та, фабрикӑра та, колхозра та, шахтӑра та.

Пӗрйышши членлӑ предложенисенче хисеплесе тухмаллине кӑтартакан сӑмахсем (пӗтӗмлетӳ сӑмахӗсем) пулма пултараҫҫӗ. Вуланӑ чух, ҫавӑн пек сӑмахсене урӑхларах сасӑпа калаҫҫӗ, хисеплеме тытӑнас умӗн чарӑнса тӑраҫҫӗ.

Чарӑнса тӑмалла вырӑнта, хисеплесе тухмалли сӑмахсем умӗн двоеточи (:) лартаҫҫӗ.

33-мӗш задача. Ҫак предложенисене ҫырса илӗр, кирлӗ ҫӗре двоеточи тата запятайӑсем лартӑр, хисеплесе тухмаллине кӑтартакан сӑмаха аялтан туртӑр.

Тӗслӗх: *Пирӗн аттен ҫакӑн пек инструментсем пур: пуртӑ, пӑчкӑ, стамеска, сава, наструк, хӗскӗч, мӑлатук.*

1. Эпир арифметикӑри пур действисене те вӗреннӗ хушассине те кӑларассине те хутлассине те пайлассине те. 2. Пирӗн

колхозра ҫӳрен кӑвак сарӑ ула тихасем ӳсеҫҫӗ. 3. Эпӗ ларакан сӗтел ҫинче темӗн те пур тетрадь ручка чернильница угольник транспортир линейка.

34-мӗш задача. Ҫакӑнта ҫырма пуҫланӑ предложенисене ҫырса ҫитерӗр. Двоеточи хыҫҫӑн пӗрйышши членсене ҫырса парӑр, кирлӗ вырӑна хӑвӑр пӗлсе запятайӑсем лартӑр.

Тӗслӗх: *Пирӗн звенори ачасем: Петя, Ваня, Миша, Саша, Феня, Валя.*

1. Эпӗ кӑҫал вуланӑ кӗнекесем:
2. Шкулти стена хаҫачӗн редколлеги членӗсем:
3. Пирӗн таврари юханшывсем:
4. Чӑваш республикинчи районсем:
5. Пирӗн ялсоветне кӗрекен колхозсем:

4 §. Сӑмах

Пӗр-пӗр ӑнланӑва пӗлтерекен сасӑсен ушкӑнне сӑмах теҫҫӗ. Пӗр сӑмахра пӗр сасӑ, ик сасӑ, виҫ сасӑ тата ытларах сасӑ та пулма пултарать.

Тӗслӗх: *эпӗ* (*3 сасӑ*), *шкул* (*4 сасӑ*), *пасар* (*5 сасӑ*), *колхоз* (*6 сасӑ*).

35-мӗш задача. Икӗ, виҫӗ е тӑватӑ сасӑран пулнӑ сӑмахсене тупса ҫырӑр.

36-мӗш задача. Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Паллӑ тунӑ сӑмахсене асӑрхӑр.

Хӗл иртрӗ. Ҫуркунне пулчӗ. Шыв-шур тапранчӗ. Шурӑ-шурӑ хирсем улаланчӗҫ. Часах вылькӑх-чӗрлӗх хире тухӗ.

Сӑмахсем тӑватӑ тӗрлӗ пулаҫҫӗ. *Хутсӑр* сӑмахсем: *кил, ҫын, ҫил;* ***хутлӑ*** **сӑмахсем:** *кӗркунне, ҫуркунне;* ***мӑшӑр сӑмахсем:*** *сӗт-ҫу, аш-какай, куҫ-пуҫ;* ***икӗ хут калакан сӑмахсем:*** *вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн, аран-аран, хуллен-хуллен, ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе, эрни-эрнипе, йӑл-йӑл, шурӑ-шурӑ.*

37-мӗш задача. а) Ҫак предложенисене ҫырса илӗр, хутлӑ сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Кӑҫал кӗркунне манӑн шӑллӑм шкула вӗренме кайрӗ. 2. Эпир кашни эрнерех вырсарникун канатпӑр. 3. Колхоз кӗракине вӑхӑтра туса пӗтерчӗ. 4. Кӗркунне улмуҫҫисем ҫулҫисене тӑкаҫҫӗ, ҫуркунне ҫулҫӑ кӑлараҫҫӗ. 5. Кайӑкхурсем карти-картипе вӗҫсе кайрӗҫ.

ă) Çак предложенисенчи мăшăр сăмахсене кăтартса парăр.

1. Эпир утни çил-тăвăл пултăр, кисрентĕр пĕтĕм тĕнчипе. 2. Çуркунне, юратрăм эпĕ сана, пĕлтĕрхи пекех тĕрĕс-тĕкеллĕн тавăрăнтăн эсĕ пирĕн таврана. 3. Шап-шурă хуратул çинче яракунах сĕрлет пылхурчĕ. 4. Кăнтăрлахи хĕвел, пĕçерт, хĕртсе яр манăн ӳт-тире. 5. Юман хăвăлне хурт-хăмăр карас карса тултарнă.

38-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илĕр. Икĕ хут калакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Юрла-юрла шавлаççĕ лайăх сасăллă шăпчăксем.

2. Шав-шав шавлать вăйлă çил, каш-каш кашлать сĕм вăрман.

3. Йăл-йăл кулать сар хĕвел, пĕтĕм тĕнче савăнать. 4. Эсĕ çых-ха, çамрăк хĕрĕм, хĕрлĕ-хĕрлĕ тутăрна. 5. Хумлă-хумлă тĕтре витĕр çутă уйăх çул хывать.

39-мĕш задача. Хутсăр сăмахсене, хутлă сăмахсене, мăшăр сăмахсене, икĕ хут калакан сăмахсене кашнинех вуншар сăмах тупăр.

40-мĕш задача. Çакăнти икĕ юпари сăмахсене пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхăр, сылтăм юпари сăмахсем çумне мĕнле аффикссем хушăннине асăрхăр.

Сăмах тĕпĕсем:	Аффикссем:
юман	юман-ра
кĕлте	кĕлте-пе
пасар	пасар-та
пуртă	пуртă-па
вăрман	вăрман-тан
эрне	эрне-ре
совет	совет-лă

Сăмахăн тĕп пĕлтерĕшне пĕлтерекен улшăнман пайне сăмах тĕпĕ теççĕ, ун çумне хушăнакан пайне аффикс теççĕ.

Чăваш чĕлхинче кĕскетнĕ хутлă самахсем те тĕл пулаççĕ. Кĕскетнĕ сăмахсене темиçе сăмахăн малтанхи сасăллисене е сыпăкĕсене илсе тăваççĕ: ЦК—Центральный Комитет, МТС—машинпа трактор станци, райком—районри комитет.

41-мĕш задача. Çак предложенисенчи кĕскетнĕ хутлă сăмахсене вăрăмлатса калăр.

1. Парти Обкомĕ çуракине хатĕрленесси çинчен постановлени йышăннă. 2. СССР правительстви чи лайăх ĕçлекен учительсене орденсем, медальсем парса наградăланă. 3. РСФСР

Верховный Совечӗ Чӑваш республикинче ҫӗнӗ районсем тӑвасси ҫинчен Чӑваш АССР Верховный Совечӗ йышӑннӑ постановление ҫирӗплетнӗ. 4. ССР Союзне халӗ 16 союзлӑ республика кӗрет; РСФСР, УССР, БССР, Азербайджан ССР, Грузи ССР, Армян ССР, Туркмен ССР, Узбек ССР, Таджик ССР, Казах ССР, Киргиз ССР, Карело-Финн ССР, Молдави ССР, Латви ССР, Литва ССР, Эстони ССР.

42-мӗш задача. Кӗскетнӗ хутлӑ сӑмахсене хӑвӑр тупса ҫырӑр, вӗсене мӗнле вӑрӑмлатса каламаллине каласа парӑр.

5 §. Япала ячӗсем.

43-мӗш задача. Ҫак сӑвва ҫырса илӗр, япала ячӗсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Ҫуркунне.

Килчӗ ырӑ ҫуркунне,
килчӗ ячӗ ӑшӑтса.
Хӗвел савать тӗнчене,
хӗл ыйхинчен вӑратса.

Тӗттӗм вӑрман чӗрӗлет,
ешӗл тумтир тӑхӑнать,
ҫеҫенхир те ешерет.
илемӗпе мухтанать;

Тӗрлӗ-тӗрлӗ чечексен
ырӑ шӑрши сарӑлать.
Пур ҫӗрте те кӑйӑксен
ырӑ юрри янӑрать.

Ҫӳлте, пӗлӗт айӗнче,
тӑри юрри илтӗнет.
Ҫемҫе курӑк ҫийӗнче
путек-сурӑх сиккелет.

Япала тесе эпир куракан япаласемпе чӗрчунсене анчах каламастпӑр, хамӑр шухӑшлама пултаракан тата мӗн? тесе ыйту лартма май килекен пулӑмсене грамматикӑра пурне те япала тетпӗр.

Грамматикӑри япала ячӗсем: халӑх хушшинчи пулӑмсемпе событисем (***пурӑнӑҫ, вӑрҫӑ, революци***); ҫутҫанталӑкри пулӑмсем (***ҫутӑ, климат, электричество***); тӗрлӗ кӑмӑл хусканӑвӗсем (***хаваслӑх, савӑнӑҫ, тарӑху, ҫилӗ***); тӗрлӗ ӑнланусем (***калӑпӑшӗ, сарлакӑшӗ, вӑхӑт, хитрелӗх, шӑплӑх***).

44-мӗш задача. Ҫакӑнти сӑмахсене пӗлтерӗш енӗпе ҫакнашкал ушкӑнсене уйӑрса ҫырӑр: 1) ҫынсем, 2) чӗрчунсем, 3) ҫутҫанталӑкри пулӑмсем, 4) халӑх хушшинчи пулӑмсемпе событисем.

Вӗренекен, пионер, отличник, ударник, стахановец, лаша, ӗне, упа, кашкӑр, шӑнкӑрчӑ, кӑсия, аслати, ҫиҫӗм, ҫумӑр, вӗри, вилӗм, пурӑнӑҫ, ҫил-тӑман, уяр, ҫавраҫил, савӑнӑҫ, хаваслӑх, илем, кӳренчӗк, демонстраци, лозунг, митинг, пасар.

Япала ячĕсем предложенире подлежащее, сказуемое тата кĕçĕн член та пулма пултараççĕ.

Тĕслĕх: *1) **Çил** вĕрет. 2) Çула эпир **вăрмана** çӳретпĕр. 3) Тимĕр, пăхăр, кĕмĕл—**металсем**.*

Малтанхи предложенире **çил** сăмах подлежащее пулать, вăл **мĕн?** тесе ыйтăнать. Иккĕмĕш предложенире **вăрмана** сăмах кĕçĕн член пулать, вăл **ăçта?** тесе ыйтăнать. Виççĕмĕш предложенире **металсем** сăмах сказуемое пулать, вăл **мĕнсем?** тесе ыйтăнать.

45-мĕш задача. Çак статьяран малтан подлежащее пулакан япала ячĕсене çырса илĕр, кайран сказуемое пулакан япала ячĕсене çырса илĕр.

Пирĕн пурăнăç—савăнăç. Пирĕн питсем çинче хаваслăх, савăнăç курăнать. Эпир пурте маттур. Пирĕн чĕре—мотор.

Пионерсем отлично вĕренме тăрăшаççĕ. Пирĕн класс ăмăртура мала тухрĕ. Эпир пурте лайăх вĕренетпĕр.

Япала ячĕсем хисеп тăрăх тата падеж тăрăх улшăнаççĕ. Чăваш чĕлхинче çичĕ падеж: **ят** падежĕ, **камăнлăх** падежĕ, **пару** падежĕ, **тăву** падежĕ, **пĕрлелĕх** падежĕ, **вырăн** падежĕ, **туху** падежĕ.

Падежсен ыйтăвĕ çапла:

Пĕрреллĕ хисеп.

1. Ят падежĕ: *кам? мĕн?*—ача, шкул.
2. Камăнлăх падежĕ: *камăн? мĕнĕн?*—ачанăн, шкулăн.
3. Пару падежĕ. *кама? мĕне? ăçта?*—ачана, шкула.
4. Тăву падежĕ: *кама? мĕне? мĕн?*—ачана, ача, шкула, шкул
5. Пĕрлелĕх падежĕ: *кампа? мĕнпе?*—ачапа, шкулпа.
6. Вырăн падежĕ: *камра? мĕнре? ăçта?*—ачара, шкулта.
7. Туху падежĕ: *камран? мĕнрен? ăçтан?*—ачаран, шкултан.

Нумайлă хисеп.

1. Ят падежĕ: *камсем? мĕнсем?*—ачасем, шкулсем.
2. Камăнлăх падежĕ: *камсен? мĕнсен?*—ачасен (ĕн), шкулсен (ĕн).
3. Пару падежĕ: *камсене? мĕнсене? ăçта?*—ачасене, шкулсене.
4. Тăву падежĕ: *камсене? мĕнсене? мĕнсем*—ачасене, ачасем, шкулсене, шкулсем.
5. Пĕрлелĕх падежĕ: *камсемпе? мĕнсемпе?*—ачасемпе, шкулсемпе.
6. Вырăн падежĕ: *камсенче? мĕнсенче? ăçта?*—ачасенче, шкулсенче.
7. Туху падежĕ: *камсенчен? мĕнсенчен? ăçтан?*—ачасенчен, шкулсенчен.

46-мӗш задача. Ҫак предложенисенчи япала ячӗсене тупӑр, вӗсем хӑш падежра тӑнине каласа парӑр.

Колхозри электростанци.

Пирӗн колхозӑн пысӑк электростанци пур. Унти мӗнпур ӗҫе комсомолецсем ертсе пыраҫҫӗ. Колхозра электростанци тунӑранпа кашни килтех Ильич ламписем ҫунма тытӑнчӗҫ.

Электростанци вӑйӗпе эпир авӑн ҫапатпӑр, тырӑ сӑвӑратпӑр, арман авӑртатпӑр. Колхозниксем пур йывӑр ӗҫе те машина вӑйӗпе тӑваҫҫӗ. Пирӗн колхозра пурӑнӑҫ питӗ савӑнӑҫлӑ.

Япала ячӗсем вӗҫленни.

Л, Н, Р, Ль, Нь, Рь-пе пӗтекен сӑмахсем вӗҫленни.

Пӗрреллӗ хисеп.

Ят.	шкул	пасар	юман
К.	шкул-ӑн	пасар-ӑн	юман-ӑн
Пар.	шкул-а	пасар-а	юман-а
Т.	шкул / шкул-а	пасар / пасар-а	юман / юман-а
Пӗр.	шкул-па	пасар-па	юман-па
В.	шкул-та	пасар-та	юман-та
Тух.	шкул-тан	пасар-тан	юман-тан

Нумайлӑ хисеп.

Ят.	шкул-сем	пасар-сем	юман-сем
К.	шкул-сен(ӗн)	пасар-сен(ӗн)	юман-сен(ӗн)
Пар.	шкул-сен-е	пасар-сен-е	юман-сен-е
Т.	шкул-сем / шкул-сен-е	пасар-сем / пасар-сен-е	юман-сем / юман-сен-е
Пӗр.	шкул-сем-пе	пасар-сем-пе	юман-сем-пе
В.	шкул-сен-че	пасар-сен-че	юман-сен-че
Тух.	шкул-сен-чен	пасар-сен-чен	юман-сен-чен

Пӗрреллӗ хисеп.

Ят.	ҫӗмел	вӗрен	кӗпер
К.	ҫӗмел-ӗн	вӗрен-ӗн	кӗпер-ӗн
Пар.	ҫӗмел-е	вӗрен-е	кӗпер-е
Т.	ҫӗмел / ҫӗмел-е	вӗрен / вӗрен-е	кӗпер / кӗпер-е
Пӗр.	ҫӗмел-пе	вӗрен-пе	кӗпер-пе
В.	ҫӗмел-те	вӗрен-те	кӗпер-те
Тух.	ҫӗмел-тен	вӗрен-тен	кӗпертен

Нумайлă хисеп.

Ят.	çĕмел-сем	вĕрен-сем	кĕпер-сем
К.	çĕмел-сен(ĕн)	вĕрен-сен(ĕн)	кĕпер-сен(ĕн)
Пар.	çĕмел-сен-е	вĕрен-сен-е	кĕпер-сен-е
Т.	çĕмел-сем çĕмел-сен-е	вĕрен-сем вĕрен-сен-е	кĕпер-сем кĕпер-сен-е
Пĕр.	çĕмел-сем-пе	вĕрен-сем-пе	кĕпер-сем-пе
В.	çĕмел-сен-че	вĕрен-сен-че	кĕпер-сен-че
Тух.	çĕмел-сен-чен	вĕрен-сен-чен	кĕпер-сен-чен

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	кукăль	супăнь
К.	кукăл-ĕн	супăн-ĕн
Пар.	кукăл-е	супăн-е
Т.	кукăль кукăл-е	супăнь супăн-е
Пĕр.	кукăль-пе	супăнь-пе
В.	кукăль-те	супăнь-те
Тух.	кукăль-тен	супăнь-тен

Нумайлă хисеп.

Ят.	кукăль-сем	супăнь-сем
К.	кукăль-сен(ĕн)	супăнь-сен(ĕн)
Пар.	кукăль-сен-е	супăнь-сен-е
Т.	кукăль-сем кукăль-сен-е	супăнь-сем супăнь-сен-е
Пĕр.	кукăль-сем-пе	супăнь-сем-пе
В.	кукăль-сен-че	супăнь-сен-че
Тух.	кукăль-сен-чен	супăнь-сен-чен

Р, л, н-па пĕтекен япала ячĕсем хытă сăмах пулсан, пĕрреллĕ хисепĕн вырăнпа туху падежĕнче ***та, тан*** аффикссем йышăнаççĕ.

2) ***Р, л, н***-па пĕтекен япала ячĕсем çемçе сăмах пулсан, пĕрреллĕ хисепĕн вырăнпа туху падежĕнче ***те, тен*** аффикссем йышăнаççĕ.

3) ***Ль, нь, рь***-пе пĕтекен япала ячĕсем те пĕрреллĕ хисепĕн вырăнпа туху падежĕсенче ***те, тен*** аффикссем йышăнаççĕ; пĕрлелĕх, вырăн тата туху падежĕнче, нумайлă хисепре те, сăмах тĕпĕнчи çемçетекен паллă (ь) тухса ӳкмест.

47-мĕш задача. ***Л, Н, Р, Ль, Нь, Рь***-пе пĕтекен пĕрер сăмах тупăр, вĕсене падеж тăрăх, хисеп тăрăх вĕçлесе тухăр.

48-мĕш задача. Аялта панă калавсене çырса илĕр, точкăсем вырăнне кирлĕ падеж аффиксĕсене лартăр.

Пирĕн ял.

Пирĕн ял вăрман хĕрринче ларать. Ял хушшипе Шетмĕ шывĕ юхса выртать. Аякран пăхсан та, шала кĕрсен те, пирĕн ял питĕ илемлĕ.

Ял... мĕнпурĕ 332 кил. Вĕсем пурте колхозра. Пирĕн ял... паха енĕсем нумай: колхоз питĕ аван ĕçлет. Ял... кĕрсен тĕлĕнсех каймалла. Ĕлĕк пĕр чӳречеллĕ хура пӳртсем çеç пулнă, халĕ килсеренех çĕнĕ пысăк çуртсем лартаççĕ. Ял... тухас та килмелле мар.

Мăкăнь.

Эпир хамăр колхозра мăкăнь пахчи турăмăр. Çуллахи вăхăтра мăкăнь... чечекĕсем пĕтĕм пахчана илем кӳреççĕ.

Мăкăнь... нумай çиме юрамасть Мăкăнь... çывăрттаракан яд пур. Мăкăнь... çу кăлараççĕ, пĕремĕк пĕçерне çĕре яраççĕ. Ачасем, эсир те пирĕн пек хăвăр пахчăрсене мăкăнь... илемлетĕр.

У, *ӳ*-пе пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

	Пĕрреллĕ хисеп.			Нумайлă хисеп	
Ят.	çыру	кĕтӳ	Ят.	çыру-сем	кĕтӳ-сем
К.	çырăв-ăн	кĕтĕв-ĕн	К.	çыру-сен(ĕн)	кĕтӳ-сен(ĕн)
Пар.	çырăв-а	кĕтĕв-е	Пар.	çыру-сен-е	кĕтӳ-сен-е
Т.	çыру çырăв-а	кĕтӳ кĕтĕв-е	Т.	çыру-сем сыру-сен-е	кĕтӳ-сем кĕтӳ-сен-е
Пĕр.	çыру-па	кĕтӳ-пе	Пĕр.	çыру-сем-пе	кĕтӳ-сем-пе
В.	çыру-ра	кĕтӳ-ре	В.	çыру-сен-че	кĕтӳ-сен-че
Тух.	çыру-ран	кĕтӳ-рен	Тух.	çыру-сен-чен	кĕтӳ-сен-чен

1) Сăмах *у* сасăпа пĕтет пулсан, пĕрреллĕ хисепĕн камăнлăх падежĕпе пару-тăву падежĕнче сăмах тĕпĕн юлашки *у* вырăнне *ăв* пулать.

2) Сăмах *ӳ*-пе пĕтет пулсан, пĕрреллĕ хисепĕн камăнлăх падежĕпе пару-тăву падежĕнче сăмах тĕпĕн юлашки *ӳ* вырăнне *ĕв* пулать.

49-мĕш задача. Тĕслĕхсене пăхса ыйту, кану, чĕнӳ, вĕренӳ сăмахсене вĕçлесе тухăр.

50-мӗш задача. Аялта çырнӑ калава çырса илнӗ чух точкӑсем вырӑнне кирлӗ аффикссене лартӑр.

51-мӗш задача. Пӗлтерӳ сӑмахпа пилӗк-ултӑ предложенилле пӗчӗк калав çырса парӑр.

Хушка пӑру.

Пирӗн звенори пионерсем хамӑр колхоз фермине шефа илчӗç. Эпир колхоз фермине пӗр хушка пӑру пӑхса çитӗнтерме пулӑшрӑмӑр.

Пӑру... эпир апат норма тӑрӑх парса тӑтӑмӑр. Пирӗн пӑру... колхозниксем питӗ тӗлӗнетчӗç. Вӑл питӗ лайӑх ӳссе çитрӗ. Пӑру... кӗлетки чӑн-чӑн пысӑк ӗненӗн пекехчӗ.

Ӑ, *ӗ*-пе пӗтекен сӑмахсем вӗçленни.

	Пӗрреллӗ хисеп.			Нумайлӑ хисеп.	
Ят.	пулӑ	тилӗ	Ят.	пулӑ-сем	тилӗ-сем
К.	пулл-ӑн	тилл-ӗн	К.	пулӑ-сен(ӗн)	тилӗ-сен(ӗн)
Пар.	пулл-а	тилл-е	Пар.	пулӑ-сен-е	тилӗ-сен-е
Т.	пулӑ / пулл-а	тилӗ / тилл-е	Т.	пулӑ-сем / пулӑ-сен-е	тилӗ-сем / тилӗ-сене
Пӗр.	пулӑ-па	тилӗ-пе	Пӗр.	пулӑ-сем-пе	тилӗ-сем-пе
В.	пулӑ-ра	тилӗ-ре	В.	пулӑ-сен-че	тилӗ-сен-че
Тух.	пулӑ-ран	тилӗ-рен	Тух.	пулӑ-сен-чен	тилӗ-сен-чен

Ӑ-па, *ӗ*-пе пӗтекен сӑмахсенче *ӑ*, *ӗ* умӗнче пӗр хупӑ сасӑ анчах пулсан, пӗрреллӗ хисепӗн камӑнлӑхпа пару-тӑву падежӗнче çав хупӑ сасӑ вӑрӑмланать, ӑна икӗ пӗрпек саспаллипе çыраççӗ: ***пулӑ—пуллӑн—пулла, атӑ—аттӑн—атта.***

52-мӗш задача. Тырӑ, тылӑ, атӑ, кӳлӗ, çӗвӗ, тӗрӗ сӑмахсене вӗçлесе парӑр, пӗрреллӗ хисеприсене нумайлӑ хисепри сӑмахсемпе танлаштарса пӑхӑр.

УРӐХ ЧӖЛХЕРЕН КӖНӖ СӐМАХСЕМ ВӖÇЛЕННИ.

1. Хупӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахсем вӗçленни.

Пӗрреллӗ хисеп.

Ят.	директор	учитель	гавань
К.	директор-ӑн	учител-ӗн	гаван-ӗн
Пар.	директор-а	учител-е	гаван-е
Т.	директор / директор-а	учитель / учител-е	гавань / гаван-е

Пĕр.	директор-па	учитель-пе	гавань-пе
В.	директор-та	учитель-те	гавань-те
Тух.	директор-тан	учитель-тен	гавань-тен

Нумайлă хисеп.

Ят.	директор-сем	учитель-сем	гавань-сем
К.	директор-сен(ĕн)	учитель-сен(ĕн)	гавань-сен(ĕн)
Пар.	директор-сен-е	учитель-сен-е	гавань-сен-е
Т.	директор-сем директор-сен-е	учитель-сем учитель-сен-е	гавань-сем гавань-сен-е
Пĕр.	директор-сем-пе	учитель-сем-пе	гавань-сем-пе
В.	директор-сен-че	учитель-сен-че	гавань-сен-че
Тух.	директор-сен-чен	учитель-сен-чен	гавань-сен-чен

Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмах хупă сасăпа пĕтет пулсан, хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем пекех вĕçленет.

Вĕçленнĕ чухне урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсен тĕпĕ улшăнмасть; сăмах *ь*-па пĕтет пулсан, вăл *ь* пĕрреллĕ хисепĕн камăнлăхпа пару-тăву падежĕнче тухса ӳкет, ун вырăнне çемçе аффикссем (*ĕн, е*) хушăнаççĕ, ытти падеж формисенче *ь* тухса ӳкмест.

Сăмах ***р, л, н, рь, ль, нь*** хупă сасăсемпе пĕтет пулсан, вырăн падежĕнче ***та, те***, туху падежĕнче ***тан, тен*** йышăнать.

53-мĕш задача. Директор, учитель, гавань сăмахсем вĕçленнине пăхса, трактор, председатель... сăмахсене вĕçлесе çырса парăр.

2. ***Ия, ея***-па пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	Россия	Германия
К.	Российă-н	Германи-н
Пар.	Российă-на	Германи-е
Т.	Российă-на	Германи(е)
Пĕр.	Российă-па	Германи-пе
В.	Российă-ра	Германи-ре
Тух.	Российă-ран	Германи-рен

	Пĕрреллĕ хисеп.	Нумайлă хисеп.
Ят.	идея	идейă-сем
К.	идейă-н	идейă-сен(ĕн)
Пар.	идейă-на	идейă-сен-е
Т.	идея идейă-на	идейăсем идейă-сен-е

Пĕр.	идейă-па	идейă-сем-пе
В.	идейă-ра	идейă-сен-че
Тух.	идейă-ран	идейă-сен-чен

Урăх чĕлхерен кĕнĕ ***ия***-па, ***ея***-па пĕтекен сăмахсем ***ят*** падежĕнче улшăнмаççĕ, ытти падежсенче, ударени ***и*** çине ӳкет пулсан, ***я*** вырăнне ***йă*** пулать; ударени урăх сасă çине ӳкет пулсан, ытти падежсенче ***я*** тухса ӳкет.

3. *А, э, о, я*-па пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	парта	общество
К.	партă-н	обществă-н
Пар.	партă-н-а	обществă-н-а
Т.	парта / партă-н-а	общество / обществă-н-а
Пĕр.	партă-па	обществă-па
В.	партă-ра	обществă-ра
Тух.	партă-ран	обществă-ран

Нумайлă хисеп.

Ят.	партă-сем	обществă-сем
К.	партă-сен(ĕн)	обществă-сен(ĕн)
Пар.	партă-сен-е	обществă-сен-е
Т.	партă-сем / партă-сен-е	обществă-сем / обществă-сен-е
Пĕр.	партă-сем-пе	обществă-сем-пе
В.	партă-сен-че	обществă-сен-че
Тух.	партă-сен-чен	обществă-сен-чен

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	басня	купэ
К.	баснь-ăн	купе-нĕн
Пар.	басньă-н-а	купен-е
Т.	басня / басньă-н-а	купэ / купе-не
Пĕр.	басньă-па	купе-пе
В.	басньă-ра	купе-ре
Тух.	басньă-ран	купе-рен

Нумайлă хисеп.

Ят.	басньă-сем	купе-сем
К.	басньă-сен(ĕн)	купе-сен(ĕн)
Пар.	басньă-сен-е	купе-сен-е

Т.	басньă-сем басньă-сен-е	купе-сем купе-сен-е
Пĕр.	басньă-сем-пе	купе-сем-пе
В.	басньă-сен-че	купе-сен-че
Тух.	басньă-сен-чен	купе-сен-чен

Урăх чĕлхерен кĕнĕ *а, о* уçă сасăсемпе пĕтекен сăмахсенче, вăл сасăсем çине ударени ӳкмест пулсан, вĕсем ят падежĕнче çаплипех юлаççĕ, камăнлăх падежĕнче *н* аффикс йышăнаççĕ, ытти падежсенче *а, о* сасăсем *ă* сасса куçаççĕ; ударени *а, о* сасăсем çине ӳкет пулсан, пур падежра та çаплипех юлаççĕ; вĕçленме *а, е* сасăпа пĕтекен сăмахсем пек вĕçленеççĕ.

Урăх чĕлхерен кĕнĕ *я* сасăпа пĕтекен сăмахсенче, вăл сасă çине ударени ӳкмест пулсан, ят падежĕнче çаплипех юлать, ытти падежсенче *я ьă*-на куçать; *э* сасăпа пĕтекен сăмахсен ытти падеж формисенче *э* выранне *е* пулать.

54-мĕш задача. Тĕслĕхсене пăхса **сцена, масса, радио** сăмахсене вĕçлесе çырса парăр. Общество сăмахпа радио сăмахсене падежсем тăрăх вĕçленĕ чух мĕнле уйрăмлăх пуррине асăрхăр. Мĕншĕн вăл апла?

4. *Ый, ая, ое, ее*-пе пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	вожат-ый	столов-ая
К.	вожат-ăй-ăн	столов-ăй-ăн
Пар.	вожат-ă-я	столов-ă-я
Т.	вожат-ый вожат-ă-я	столов-ая столов-ă-я
Пĕр.	вожат-ăй-па	столов-ăй-па
В.	вожат-ăй-ра	столов-ăй-ра
Тух.	вожат-ăй-ран	столов-ăй-ран

Нумайлă хисеп.

Ят.	вожат-ăй-сем	столов-ăй-сем
К.	вожат-ăй-сен(ĕн)	столов-ăй-сен(ĕн)
Пар.	вожат-ăй-сен-е	столов-ăй-сен-е
Т.	вожат-ăй-сем вожат-ăй-сен-е	столов-ăй-сем столов-ăй-сен-е
Пĕр.	вожат-ăй-сем-пе	столов-ăй-сем-пе
В.	вожат-ăй-сен-че	столов-ăй-сен-че
Тух.	вожат-ăй-сен-чен	столов-ăй-сен-чен

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	сказуем-ое	подлежащ-ее
К.	сказуем-ăй-ăн	подлежащ-и-н-(йĕн)
Пар.	сказуем-ă-я	подлежащ-и-е
Т.	сказуем-ое сказуем-ă-я	подлежащ-ее подлежащ-и-е
Пĕр.	сказуем-ăй-па	подлежащ-и-пе
В.	сказуем-ăй-ра	подлежащ-и-ре
Тух.	сказуем-ăй-ран	подлежащ-и-рен

Нумайлă хисеп.

Ят.	сказуем-ăй-сем	подлежащ-и-сем
К.	сказуем-ăй-сен(ĕн)	подлежащ-и-сен(ĕн)
Пар.	сказуем-ăй-сен-е	подлежащ-и-сен-е
Т.	сказуем-ăй-сем сказуем-ăй-сен-е	подлежащ-и-сем подлежащ-и-сен-е
Пĕр.	сказуем-ăй-сем-пе	подлежащ-и-сем-пе
В.	сказуем-ăй-сен-че	подлежащ-и-сен-че
Тух.	сказуем-ăй-сен-чен	подлежащ-и-сен-чен

Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ ***ый, ая, ое, ее***-пе пĕтекен япала ячĕсем пĕрреллĕ хисепĕн ят падежĕнче улшăнмаççĕ, ытти падежсенче ***ый, ая, ое*** вырăнне ***ăй*** пулать, ***ее*** вырăнне ***и*** пулать.

55-мĕш задача. Хăвăр **ый, ая, ое, ее** аффикссемпе пĕтекен сăмахсем тупăр, вĕсене вĕçлесе çырса парăр.

5. *Ая, ий*-пе пĕтекен пайăр ятсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	Ивановская	Ят.	Чацкий
К.	Ивановская-н	К.	Чацкий-ĕн
Пар.	Ивановская-на	Пар.	Чацки-е
Т.	Ивановская-на	Т.	Чацки-е
Пĕр.	Ивановская-па	Пĕр.	Чацкий-пе
В.	Ивановская-ра	В.	Чацкий-ре
Тух.	Ивановская-ран	Тух.	Чацкий-рен

Ая-па пĕтекен пайăр ятсем вĕçленнĕ чух, хăйсен пуçламăш формине улăштармаççĕ: ят падежĕнче те, ытти падежсенче те çаплипех юлаççĕ; камăнлăх падежĕнче ***н*** аффикс йышăнаççĕ.

Ий аффикспа пĕтекен пайăр ятсем ят падежĕнче çаплипех юлаççĕ, камăнлăхпа, пару-тăву падежĕнче *и*-пе пĕтекен сăмахсем пек вĕçленеççĕ, ытти падежсенче хупă сасăпа пĕтекен çемçе сăмахсем пек вĕçленеççĕ.

56-мĕш задача. Островская, Борский пайăр ятсене вĕçлесе çырса парăр.

6. Çемçетекен паллăпа (*ь*-па) пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.		Нумайлă хисеп.	
Ят.	октябрь	Ят.	октябрь-сем
К.	октябр-ĕн	К.	октябрь-сен(ĕн)
Пар.	октябр-е	Пар.	октябрь-сен-е
Т.	{ октябрь { октябр-е	Т.	{ октябрь-сем { октябрь-сен-е
Пĕр.	октябрь-пе	Пĕр.	октябрь-сем-пе
В.	октябрь-те	В.	октябрь-сен-че
Тух.	октябрь-тен	Тух.	октябрь-сен-чен

Çемçетекен паллăпа (*ь*) пĕтекен сăмахсене вĕçленĕ чухне пĕрреллĕ хисепĕн камăнлăхпа пару-тăву падежĕнче **ь** палли тухса ӳкет, ытти падежсенче тухса ӳкмест.

57-мĕш задача. Тĕслĕхе пăхса **дирижабль, автомобиль, пристань** ялала ячĕсене вĕçлесе тухăр. **Автомобиль** сăмаха тĕрлĕ падежсенче илсе предложенисем тăвăр.

7. *Сть, сь*-пе пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	власть	повесть	рысь
К.	влаç-ăн	повеç-ĕн	рыç-ĕн
Пар.	влаç-а	повеç-е	рыç-е
Т.	{ власть { влаç-а	{ повесть { повеç-е	{ рысь { рыç-е
Пĕр.	влаç-па	повеç-пе	рыç-пе
В.	влаç-ра	повеç-ре	рыç-ре
Тух.	влаç-ран	повеç-рен	рыç-рен

Нумайлă хисеп.

Ят.	влаç-сем	повеç-сем	рыç-сем
К.	влаç-сен(ĕн)	повеç-сен(ĕн)	рыç-сен(ĕн)
Пар.	влаç-сен-е	повеç-сен-е	рыç-сен-е

Т.	власҫ-сем власҫ-сен-е	повеҫ-сем повеҫ-сен-е	рыҫ-сем рыҫ-сен-е
Пĕр.	власҫ-сем-пе	повеҫ-сем-пе	рыҫ-сем-пе
В.	власҫ-сен-че	повеҫ-сен-че	рыҫ-сен-че
Тух.	власҫ-сен-чен	повеҫ-сенчен	рыҫ-сен-чен

Сть, сь-пе пĕтекен япала ячĕсем ят падежĕнче ҫаплипех юлаҫҫĕ, ытти падежсенче ***сть, сь*** вырăнне *ҫ* ҫырмалла.

58-мĕш задача. Известь, окись сăмахсене вĕҫлесе ҫырса парăр.

8. *Ец, ок*-па пĕтекен сăмахсем вĕҫленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	красноармеец	участок
К.	красноармеец-ăн	участок-ăн
Пар.	красноармеец-а	участок-а
Т.	красноармеец красноармеец-а	участок участок-а
Пĕр.	красноармеец-па	участок-па
В.	красноармеец-ра	участок-ра
Тух.	красноармеец-ран	участок-ран

Нумайлă хисеп.

Ят.	красноармеец-сем	участок-сем
К.	красноармеец-сен(ĕн)	участок-сен(ĕн)
Пар.	красноармеец-сен-е	участок-сен-е
Т.	красноармеец-сем красноармеец-сен-е	участок-сем участок-сен-е
Пĕр.	красноармеец-сем-пе	участок-сем-пе
В.	красноармеец-сен-че	участок-сен-че
Тух.	красноармеец-сен-чен	участок-сен-чен

Ец, ок-па пĕтекен япала ячĕсем вĕҫленнĕ чух вĕсен ят падежĕнчи форми пур падежсенче те ҫаплипех юлать, ун ҫумне падеж аффиксĕсем хутшăнаҫҫĕ.

59-мĕш задача. Тĕслĕхе пăхса **стахановец, список** сăмахсене вĕҫлесе ҫырса парăр.

9. *Изм, ист, иат*-па пĕтекен сăмахсем вĕҫленни.

Ят.	социализм	коммунист	комиссариат
К.	социализм-ăн	коммунист-ăн	комиссариат-ăн
Пар.	социализм-а	коммунист-а	комиссариат-а

Т.	социализм социализм-а	коммунист коммунист-а	комиссариат комиссариат-а
Пĕр.	социализм-па	коммунист-па	комиссариат-па
В.	социализм-ра	коммунист-ра	комиссариат-ра
Тух.	социализм-ран	коммунист-ран	комиссариат-ран

Изм, ист, иат-па пĕтекен япала ячĕсем те ***ец, ок***-па пĕтекен сăмахсем пекех вĕçленеççĕ; вĕсен ят падежĕнчи форми пур падежсенче те çаплипех юлать, ун çумне падеж афиксĕсем хушăнаççĕ.

60-мĕш задача. Тĕслĕхе пăхса **ленинизм, тракторист, стипендиат** сăмахсене вĕçлесе çырса парăр.

10. Икĕ пĕрпек хупă саспаллипе пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	класс	металл
К.	клас-ăн	метал-ăн
Пар.	клас-а	метал-а
Т.	класс клас-а	металл метал-а
Пĕр.	клас-па	метал-па
В.	клас-ра	метал-та
Тух.	клас-ран	метал-тан

Нумайлă хисеп.

Ят.	клас-сем	метал-сем
К.	клас-сен(ĕн)	метал-сен(ĕн)
Пар.	клас-сен-е	метал-сен-е
Т.	клас-сем клас-сен-е	метал-сем метал-сен-е
Пĕр.	клас-сем-пе	метал-сем-пе
В.	клас-сен-че	метал-сен-че
Тух.	клас-сен-чен	метал-сен-чен

Икĕ пĕр пек хупă саспаллипе пĕтекен япала ячĕсем ят падежĕнче çаплипех юлаççĕ, ытти падежсенче вĕçĕнчи пĕр хупă саспаллийĕ тухса ӳкет.

61-мĕш задача. Донбасс, грамм сăмахсене вĕçлесе парăр.

Япала ячĕсем камăнлăх аффиксĕсене йышăнни.

62-мĕш задача. Çак сăвва вуласа тухăр. Паллă тунă япала ячĕсен пĕлтерĕшĕсене асăрхăр.

Çут хĕвелĕ кулнă майăн
Пит те ăшă, шăрăх.
Юхтарам-ха **юррăма** эп
хир-вăрмансем тăрăх.
Ăшă çил вĕрет вăшт та вăш,
вутланать **вăй-халăм!**
Ак куç умĕнче Мăштавăш,
эп çуралнă **ялăм.**

Чăваш чĕлхинче пĕр сăмахпа каласах япала камăннине пĕлтерме пулать. Япала камăннине пĕлтерме япала ячĕ çумне камăннине пĕлтерекен, аффикссем **хушаççĕ.**

Камăннине пĕлтерекен аффикссем çаксем: ***ăм-ĕм-м, у-ÿ, ĕ, и.***

Ăм-ĕм-м—1-мĕш сăпат аффиксĕсем, манăннине пĕлтереççĕ; ***у-ÿ***—2-мĕш сăпат аффиксĕсем, санăннине пĕлтереççĕ; ***ĕ, и***—3-мĕш сăпат афиксĕсем, унăннине пĕлтереççĕ.

Камăнлăх аффиксĕ хушăннă япала ячĕсем вĕçленни.

1) Пĕрремĕш сăпат аффиксĕ йышăннă сăмахсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	куç-ăм	кĕрĕк-ĕм	ĕне-м
К.	куç-ăм-ăн	кĕрĕк-ĕм-ĕн	ĕне-м-ĕн
Пар.	куç-ăм-а	кĕрĕк-ĕм-е	ĕне-м-е
Т.	куç-ăм-а	кĕрĕк-ĕм-е	ĕне-м-е
Пĕр.	куç-ăм-па	кĕрĕк-ĕм-пе	ĕне-м-пе
В.	куç-ăм-ра	кĕрĕк-ĕм-ре	ĕне-м-ре
Тух.	куç-ăм-ран	кĕрĕк-ĕм-рен	ĕне-м-рен

Нумайлă хисеп.

Ят.	куç-ăм-сем	кĕрĕк-ĕм-сем	ĕне-м-сем
К.	куç-ăм-сен(ĕн)	кĕрĕк-ĕм-сен(ĕн)	ĕне-м-сен(ĕн)
Пар.	куç-ăм-сен-е	кĕрĕк-ĕм-сен-е	ĕне-м-сен-е
Т.	куç-ăм-сен-е	кĕрĕк-ĕм-сен-е	ĕне-м-сен-е
Пĕр.	куç-ăм-сем-пе	кĕрĕк-ĕм-сем-пе	ĕне-м-сем-пе
В.	куç-ăм-сен-че	кĕрĕк-ĕм-сен-че	ĕне-м-сен-че
Тух.	куç-ăм-сен-чен	кĕрĕк-ĕм-сен-чен	ĕне-м-сен-чен

63-мĕш задача. Ялăм сăмаха вĕçленĕ пек, юлташăм, çырăвăм сăмахсене падежсем тăрăх пур хисепре те вĕçлесе çырса парăр.

2) Иккĕмĕш сыпăк аффиксĕ йышăннă сăмахсем вĕçленни.

Пĕррелле хисеп.

Ят.	куç-у	кĕрĕк-ÿ	ĕн-ÿ
К.	куç-у-н	кĕрĕк-ÿ-н	ĕн-ÿ-н
Пар.	куç-на	кĕрĕк-не	ĕн-ÿ-не
Т.	куç-на	кĕрĕк-не	ĕн-ÿ-не
Пĕр.	куç-у-па	кĕрĕк-ÿ-пе	ĕн-ÿ-пе
В.	куç-ун-та	кĕрĕк-ÿн-те	ĕн-ÿн-те
Тух.	куç-ун-тан	кĕрĕк-ÿн-тен	ĕв-ÿн-тен

Нумайлă хисеп.

Ят.	куç-у-сем	кĕрĕк-ÿ-сем	ĕн-ÿ-сем
К.	куç-у-сен(ĕн)	кĕрĕк-ÿ-сен(ĕн)	ĕн-ÿ-сен(ĕн)
Пар.	куç-у-сен-е	кĕрĕк-ÿ-сен-е	ĕн-ÿ-сен-е
Т.	куç-у-сен-е	кĕрĕк-ÿ-сен-е	ĕн-ÿ-сен-е
Пĕр.	куç-у-сем-пе	кĕрĕк-ÿ-сем-пе	ĕн-ÿ-сем-пе
В.	куç-у-сен-че	кĕрĕк-ÿ-сен-че	ĕн-ÿ-сен-че
Тух.	куç-у-сен-чен	кĕрĕк-ÿ-сен-чен	ĕн-ÿ-сен-чен

64-мĕш задача. Куçу, кĕрĕкÿ, ĕнÿ сăмахсене вĕçленĕ пек, юлташу, кĕнекÿ сăмахсене вĕçлесе çырса парăр.

3) Виççĕмĕш сăпат аффиксĕсем йышăннă сăмахсем вĕçленни.

Пĕррелле хисеп.

Ят.	куç-ĕ	кĕрĕк-ĕ	ĕн-и
К.	куç-ĕн	кĕрĕк-ĕн	ĕн-и-н
Пар.	куç-не	кĕрĕк-не	ĕн-и-не
Т.	куç-не	кĕрĕк-не	ĕн-и-не
Пĕр.	куç-ĕ-пе	кĕрĕк-ĕ-пе	ĕн-и-пе
В.	куç-ĕн-че	кĕрĕк-ĕн-че	ĕн-ин-че
Тух.	куç-ĕн-чен	кĕрĕк-ĕн-чен	ĕн-ин-чен

Нумайлă хисеп.

Ят.	куç-ĕ-сем	кĕрĕк-ĕ-сем	ĕн-и-сем
К.	куç-ĕ-сен	кĕрĕк-ĕ-сен	ĕн-и-сен(ĕн)
Пар.	куç-ĕ-сене	кĕрĕк-ĕ-сен-е	ĕн-и-сен-е
Т.	куç-ĕ-сене	кĕрĕк-ĕ-сен-е	ĕн-и-сен-е

Пĕр.	куç-ĕ-сем-пе	кĕрĕк-ĕ-сем-пе	ĕн-и-сем-пе
В.	куç-ĕ-сен-че	кĕрĕк-ĕ-сен-че	ĕн-и-сен-че
Тух.	куç-ĕ-сен-чен	кĕрĕк-ĕ-сен-чен	ĕн-и-сен-чен

65-мĕш задача. Куçĕ, кĕрĕкĕ, ĕни сăмахсене вĕçленĕ пек, **куçлăхĕ, çĕлĕкĕ, сĕреки** сăмахсене пур хисепре те вĕçлесе парăр.

4) Виççĕмĕш сăпат аффиксĕ йышăннă *т, ть, д, дь,* сасăсемпе пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	апач-ĕ	сач-ĕ	кровач-ĕ	тетрач-ĕ
К.	апач-ĕн	сач-ĕн	кровач-ĕн	тетрач-ĕн
Пар.	апат-не	сад-не	кровать-не	тетрадь-не
Т.	апат-не	сад-не	кровать-не	тетрадь-не
Пĕр.	апач-ĕ-пе	сач-ĕ-пе	кровач-ĕ-пе	тетрач-ĕ-пе
В.	апат-ĕн-че	сад-ĕн-че	кроват-ĕн-че	тетрад-ĕн-че
Тух.	апат-ĕн-чен	сад-ĕн-чен	кроват-ĕн-чен	тетрад-ĕн-чен

Нумайлă хисеп.

Ят.	апач-ĕ-сем	сач-ĕ-сем
К.	апач-ĕ-сен(ĕн)	сач-ĕ-сен(ĕн)
Пар.	апач-ĕ сен-е	сач-ĕ-сен-е
Т.	апач-ĕ-сен-е	сач-ĕ-сен-е
Пĕр.	апач-ĕ-сем-пе	сач-ĕ-сем-пе
В.	апач-ĕ-сен-че	сач-ĕ-сен-че
Тух.	апач-ĕ-сен-чен	сач-ĕ-сен-чен
Ят.	кровач-ĕ-сем	тетрач-ĕ-сем
К.	кровач-ĕ-сен(ĕн)	тетрач-ĕ-сен(ĕн)
Пар.	кровач-ĕ-сен-е	тетрач-ĕ-сен-е
Т.	кровач-ĕ-сен-е	тетрач-ĕ-сен-е
Пĕр.	кровач-ĕ-сем-че	тетрач-ĕ-сем-пе
В.	кровач-ĕ-сен-че	тетрач-ĕ-сен-че
Тух.	кровач-ĕ-сен-чен	тетрач-ĕ-сен-чен

Япала ячĕсем *т, ть, д, дь* сасăсемпе пĕтеççĕ пулсан, вĕсем çумне виççĕмĕш сăпатăн камăнлăх аффиксĕ хушăннă чух, *т, ть, д, дь* сасăсем вырăнне *ч* сасă кĕрсе ларать. Тĕслĕх: *турат—турачĕ, çунат—çуначĕ, съезд—съезчĕ, тетрадь—тетрачĕ.*

Пĕрреллĕ хисепĕн **пару, вырăн** тата **туху** падежĕсенче çак формăри **т, д, ть, дь** сасăсем каллех хăйсен вырăннех йышăнаççĕ. Тĕслĕх: *турачĕ* (ят п.), *турачĕн* (камăнлăх п.), *туратне* (пару п.), *турачĕпе* (пĕрлелĕх п.), *туратĕнче* (вырăн п.), *туратĕнчен* (туху п.), *турачĕсем* т. ыт. те.

66-мĕш задача Çак предложенисене çырса илĕр; **т, ть, д, дь** вырăнне **ч** кĕрсе ларнă сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Çурхи ĕçсен вăхăчĕ çывăхарса пырать. 2. Пирĕн çĕр айĕнчи пурлăхăн шучĕ те çук. 3. Лайăх çыракан ачан тетрачĕсем те таса пулаççĕ. 4. Пирĕн çĕршывăн самолечĕсем—чи çӳллĕ, чи аякка, чи хăвăрт вĕçекен самолетсем.

Сăмах тăвакан аффикссем хушăнса пулнă япала ячĕсем.

67-мĕш задача. Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсен пулăвне сăнаса пăхăр.

1. Ирхине **кĕтӳçĕ** хăй кĕтĕвĕ патнераскать.
2. Колхозра **тимĕрçĕ**—питĕ кирлĕ ăстаçă.
3. Пирĕн класри ачасем—пурте манăн **тантăшсем**.
4. Çулла эпир **шĕшкĕлĕхе** мăйăр татма каятпăр. 5. Хĕлле эпир **çунашкапа,** конькипе, йĕлтĕрпе ярăнма юрататпăр.

Чăваш чĕлхинче япала ячĕсем çумне уйрăм аффикссем хушса çĕнĕ япала ячĕсем тума пулать. Сăмахран: *пулă—пулăçă, кĕтӳ—кĕтӳçĕ, арпа—арпалăх, шĕшкĕ—шĕшкĕлĕх, çуна—çунашка, тан—тантăш.*

Япала ятĕнчен иккĕмĕшле сăмахсем тăвакан аффикссем çаксем пулаççĕ: *- çă, - çĕ, - лăх, - лĕх, - таш, - тĕш; - шка, - шке, - ске, - ка, - ке, - ук, - ӳк.*

68-мĕш задача. Çакăнти паллă тунă сăмахсем мĕнле пулнине ăнлантарăр.

1. Вĕçет вĕçевçĕ уй-хир урлă, çитет вăл Çурçĕр полюсне. 2. Юрлать юрăçă юррине, савăнтарать сассипе. 3. Çурçĕр океанĕнче пысăк пăрлăхсем нумай. 4. Лăпкă лашана çăварлăх памалла мар.

6 §. Паллă ячĕсем.

69-мĕш задача. Çак сăвва вуласа тухăр. Унтан çырса илĕр. Япала паллине пĕлтерекен сăмахсене аялтан пĕр йĕр туртса паллă тăвăр.

Вăл кунсене манмĕ Джамбул виличчен,
курса эп çӳрерĕм кăмăл туличчен,
курса эп çӳрерĕм тăван çĕршыва
хăватлă та вутлă маттур утпала.

Вĕçсе шуса иртрĕç темĕн тĕрлĕ çĕрсем,
вĕлт-вĕлт туса юлчĕç садсем, уй-хирсем.
Шăваççĕ кăвак пĕлĕтсем çилпеле
таçти аякри çĕршывсем еннелле.

Телейлĕ çĕршывăм, мĕн чухлĕ илем!
Епле юррăма эп ăна пехилем.

Япаласен паллине пĕлтерекен сăмахсен ушкăнне паллă ячĕ теççĕ.

Паллă ячĕсем предложенире япала ячĕсене ăнлантарса параççĕ. Предложенире вĕсем падежсем тăрăх улшăнмаççĕ, анчах япала ятне куçсан, падеж аффиксĕсене йышăнма пултараççĕ, тата камăннине пĕлтерекен виççĕмĕш сăпат аффиксне йышăнаççĕ (*хĕрли, сăрри, пысăкки*). Паллă ячĕсене ***мĕнле? ăçта? хăçанхи?*** ыйтусем лартса пĕлеççĕ.

Тĕслĕх: *Пўрт çине* (*мĕнле?*) ***симĕс*** *сăрăпа сăрланă. Çулла* (*ăçти?*) ***вăрманти*** *кайăксен юррине итлеме юрататăп. Текех* (*хăçанхи?*) *ĕлĕкхи вăхăт килес çук,* (*мĕнле?*) *пусмăрлă пурăнăç тавăрăнас çук.*

Паллă ячĕсем вĕçленни.

Пĕрремĕш хисеп.

Ят.	шурă	хĕрлĕ
К.	шурр-ăн	хĕрлĕ-н
Пар.	шурр-а	хĕрл-е
Т.	шурă	хĕрлĕ
	шурр-а	хĕрле
Пĕр.	шурă-па	хĕрлĕ-пе
Выр.	шурă-ра	хĕрлĕ-ре
Тух.	шурă-ран	хĕрлĕ-рен

Нумайлă хисеп.

Ят.	шурă-сем	хĕрлĕ-сем
К.	шурă-сен(ĕн)	хĕрлĕ-сен(ĕн)
Пар.	шурă-сен-е	хĕрлĕ-сен-е
Т.	шурă-сем	хĕрлĕ-сем
	шурă-сен-е	хĕрлĕ-сен-е
Пĕр.	шурă-сем-пе	хĕрлĕ-сем-пе
В.	шурă-сен-че	хĕрлĕ-сен-че
Тух.	шурă-сен-чен	хĕрлĕ-сен-чен

Паллă ячĕсем вĕçленмеççĕ. Хăйсем тĕллĕн тăрса япала ячĕсем вырăнĕнче пулсан, япала ячĕсем пек вĕçленеççĕ.

70-мĕш задача. Çак предложенисенче япала ячĕ вырăнне пулакан паллă ячĕсене тупăр, вĕсем хăш падежра, хăш хисепре тăнине кăтартса парăр.

Пирĕн пичче асла тухрĕ. Колхоз канцелярине шурăпа сăрланă. Шкул çине хĕрлĕпе сăрланă. Пирĕн социализмлă аслă çĕршыв—пĕтĕм тĕнчипех паллă çĕршыв. Тăшмансем пирĕн çине эпир вăйлăран килсе çулăхаймаççĕ. Эпĕ кăçал пур предметпа та отлично паллăсем илтĕм.

Паллă ячĕсем çумне виççĕмĕш сăпат аффиксĕ *и* хушăнма пултарать.

***И* аффикс уйăрса кăтартса каланине пĕлтерет.**

Тĕслĕх: ***Вăйли***—хăшĕ вăйлă, çавă; ***кĕçĕнни***—хăшĕ кĕçĕн, çавă.

***И* аффикс хупă сасăпа пĕтекен паллă ячĕ çумне хушăнсан, çав хупă сасă вăрăмланать.**

Тĕслĕх: *Пысăк—пысăкки, кахал—кахалли, сахал—сахалли.*

Çавăн пекех, *и* аффикс *ă, ĕ* сасăсемпе пĕтекен паллă ячĕ çумне хушăнсан та, çав *ă, ĕ* умĕнче пĕр хупă сасă анчах пулсан, вăл хупă сасă вăрăмланать.

Тĕслĕх: *Ватă—ватти, шурă—шурри, вĕтĕ—вĕтти, кивĕ—кивви.*

71- мĕш задача. Çакăнти предложенисенче *и* аффикс хушăннă паллă ячĕсене тупăр.

Настук аппан ик ывăл. Асли Мускавра вĕренет, кĕçĕнни Шупашкарта ĕçлет. Ёнер вăл аслинчен çыру илчĕ.

Манăн виçĕ ручка пур: хĕрли, кăвакки, кĕренни. Хĕрлине мана пĕлтĕр учитель панăччĕ, кăваккине пичче панă, кĕреннине кăçал хам илтĕм.

72-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне виççĕмĕш сăпат аффиксне çырăр.

Эпир виççĕн пĕр тăван: аслă... колхоз бригадирĕ, вăталăх... инженер, хам вĕренетĕп. Лашасем: кăвак... улăхра, çӳрен... сухара, тур... витере тăрать. Утă вĕтĕ... лайăх. Вутă типĕ... лайăх.

И аффикс йышăннă паллă ячĕсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

Ят.	вăйли	хури	лайăххи
К.	вăйли-н	хури-н	лайăххи-н
Пар.	вăйли-не	хури-не	лайăххи-не
Т.	вăйли-не	хури-не	лайăххи-не

Пĕр.	вăйли-пе	хури-пе	лайăххи-пе
В.	вăйли-н-че	хури-н-че	лайăххи-н-че
Тух.	вăйли-н-чен	хури-н-чен	лайăххи-н-чен
		Нумайлă хисеп.	
Ят.	вăйли-сем	хури-сем	лайăххи-сем
К.	вăйли-сен(ĕн)	хури-сен(ĕн)	лайăххи-сен(ĕн)
Пар.	вăйли-сен-е	хури-сен-е	лайăххи-сен-е
Т.	вăйли-сен-е	хури-сен-е	лайăххи-сен-е
Пĕр.	вăйли-сем-пе	хури-сем-пе	лайăххи-сем-пе
В.	вăйли-сен-че	хури-сен-че	лайăххи-сен-че
Тух.	вăйли-сен-чен	хури-сен-чен	лайăххи-сен-чен

73-мĕш задача. Ула, шултăра, сарлака, паттăр, хăюллă паллă ячĕсем çумне и аффикс хушăр та, тĕслĕхсене пăхса, вĕçлесе парăр.

Паллă ячĕсене тăвакан аффикссем.

74-мĕш задача. Çак предложенисенчи паллă ячĕсем мĕнле пулнине асăрхăр.

1. Хирти тырăсем пулса çитрĕç. 2. Вăйлă çил вĕрет. 3. Сĕтлĕ ĕнен усси пысăк. 4. Эпĕ вырăсла кĕнеке илтĕм. 5. Сăртри хыр кашласа ларать. 6. Ирхи сывлăм йăлтăртатать. 7. Вăрмансенчи йывăçсем симĕсленчĕç.

Япала ячĕсем çумне *лă, лĕ* **(социализм—социализмлă; илем—илемлĕ)**, *ла, ле* **(паттăр—паттăрла; хирĕç—хирĕçле)**, *сăр, сĕр* **(вăй—вăйсăр; кĕнеке—кĕнекесĕр)**, *ри, ти, чи* **(тавра—таврари, вăрман—вăрманти, вăрмансен—вăрмансенчи)**, *хи* **(çуркунне—çуркуннехи)** аффикссем хушăнса паллă ячĕсем пулма пултараççĕ.

75-мĕш задача. Çак статьяна çырса илĕр, япала ячĕсенчен ***лă-лĕ, ла-ле, сăр-сĕр, ри, ти, чи, хи*** аффикссем хушăннипе пулнă паллă ячĕсене тупăр, вĕсене аялтан пĕр йĕрпе туртăр, мĕнле япала ятĕнчен пулнине каласа парăр.

Кĕркуннехи вăрман.

Кĕркуннехи вăрман сап-сарă ларать. Вăйлă çил вĕрнипе ăвăс çулçисем шăпăртатса тăкăнаççĕ, уçланкăри курăксем типсе лараççĕ. Пĕтĕм вăрманти кайăксем юрлама чарăнаççĕ.

Илемсĕр пылчăклă кунсем иртсе каяççĕ. Часах илемлĕ хĕл кунĕ çитет.

76-мĕш задача. Çак предложенисенче паллă тунă паллă ячĕсем мĕнле член пулнине кăтартса парăр.

1. **Аслă** хирте **сарă** тулă хумханса ларать.

2. **Сĕм** вăрманти **çивчĕ** пакша чалт та чалт сикет. **3. Лăпкă** çил ачашшăн вĕрет. **4. Ватă** йăмра çырма хĕрринче ларать.

Паллă ячĕсем предложенире е подлежащие е кĕçĕн члена ăнлантаракан кĕçĕн член пулса тăраççĕ.

Хĕрлĕ хĕвел тухрĕ.

Кунта *хĕрлĕ* паллă ячĕ, вăл *хĕвел* подлежащие ăнлантарать.

Тарăн кӳлĕре пулăсем ишсе çӳреççĕ.

Кунта *тарăн* паллă ячĕ, *кӳлĕре* кĕçĕн члена ăнлантарса парать.

Хăш чухне паллă ячĕ предложенире сказуемое та пулма пултарать.

Çурхи çанталăк илемлĕ.

Кунта *илемлĕ* паллă ячĕ—сказуемое.

77-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илĕр. Подлежащие ăнлантаракан паллă ячĕсене пĕр йĕрпе, кĕçĕн члена ăнлатаракан паллă ячĕсене икĕ йĕрпе аялтан туртса паллă тăвăр.

Пирĕн тăван çĕршыв çулсеренех малалла кайса пырать. Вăл капитализмлă çĕршывсем хушшинче кисренми чул ту евĕрлĕ çĕкленсе тăрать. Пирĕн çĕршывра класлă пусмăрлăх çук, нацилĕ пусмăрлăх çук, çынна çын эксплоатацилесси çук.

78-мĕш задача. Çак паллă ячĕсемпе япала ячĕсене кĕртсе предложенисем тăвăр.

1. Улăхри симĕс курăк.
2. Шыври шултăра пулăсем.
3. Хирти ешĕл калча.
4. Сарă чечексем.
5. Вăйлă çумăр.
6. Ялсенчи клубсем.
7. Кĕрхи çанталăк.
8. Пĕлĕт çинчи çăлтăрсем.

7 §. Местоименисем.

Предложенире япала ячĕсем, паллă ячĕсем тата хисеп ячĕсем вырăнне пулакан сăмахсене местоименисем теççĕ.

Тĕслĕхсем: *Пирĕн пичче çиччĕмĕш класра вĕренет. Вăл хăйсен класĕнче отличник шутланать. Ăна час-часах премисем параççĕ.*

Пĕрремĕш предложенире **пичче** сăмах япала ячĕ пулать. Иккĕмĕш предложенире **пичче** сăмах вырăнне **вăл** местоимени, виççĕмĕш предложенире **ăна** местоимени кĕрсе ларнă.

79-мĕш задача. Хăвăртан шухăшласа, япала ячĕсем вырăнне местоименисем лартса, предложенисем çырăр, вĕсене ăнлантарса парăр.

Эпӗ, эсӗ, вӑл местоименисем вӗҫленни.

Пӗрреллӗ хисеп.

Ят.	эпӗ	эсӗ	вӑл
К.	ман-ӑн, ман	сан-ӑн, сан	ун-ӑн, ун
Пар.	ман-а	сан-а	ӑн-а
Т.	ман-а	сан-а	ӑн-а
Пӗр.	ман-па	сан-па	ун-па
В.	ман-ра	сан-ра	ун-ра
Тух.	ман-ран	сан-ран	ун-ран

Нумайлӑ хисеп.

Ят.	эпир	эсир	вӗсем
К.	пир-ӗн	сир-ӗн	вӗсен(ӗн)
Пар.	пир-е	сир-е	вӗсен-е
Т.	пир-е	сир-е	вӗсен-е
Пӗр.	пирӗн-пе	сирӗн-пе	вӗсем-пе
В.	пирӗн-те, пир-те	сирӗн-те, сир-те	вӗсен-че
Тух.	пирӗн-тен, пир-тен	сирӗн-тен, сир-тен	вӗсен-чен

80-мӗш задача. Ҫак предложенисенче сӑпатлӑ местоименисене тупӑр, вӗсем мӗнле падежра, хӑш хисепре тӑнине кӑтартса парӑр.

Вӑл паян шкула ирех тухса чупрӗ. Эпӗ ӑна колхоз клубӗ тӗлӗнче аран хӑваласа ҫитрӗм.

— Эсӗ мӗншӗн хытӑ васкатӑн?—терӗм те, вӑл мана:

— Стена хаҫачӗ кӑлармалла-ха,—терӗ.

---

1. Вӗсем пирӗнтен маларах вӗренсе тухнӑ. 2. Эпир ун чух кружок занятине юлнӑ. 3. Вӗсемпе пӗрле эсир те хулана каятӑр пулӗ?

81-мӗш задача. Ҫак предложенисене ҫырса илӗр, скобкӑра тӑракан местоименисене кирлӗ падежра лартӑр.

1. Эпӗ (вӑл) пӗрле кинона кайрӑм. Вӑл (эпӗ) билет илсе пачӗ. 2. Учитель (эпир) килте вулама хушрӗ. Эпӗ (вӑл) маларах вуласа тухрӑм. 3. (Эсӗ) карандашу хуҫӑлнӑ. 4. Эпӗ (вӑл) карандашне шӗвӗртсе паратӑп. 5. (Эпир) кил пит аван, кашни чӳрече ҫинчех чечексем ешерсе лараҫҫӗ. Эпир (вӗсем) кашни кунах таса шывпа шӑваратпӑр. 6. Иван (эпӗ) хытӑрах чупать.

Хам, ху, хăй местоименисем вĕçленни.

Пĕррелле хисеп.

Ят.	хам	ху	хăй
К.	хам-ăн	хăв-ăн	хăй-ĕн
Пар.	хам-а	хăв-на	хăй-не
Т.	хам-а	хăв-на	хăй-не
Пĕр.	хам-па	ху-па, хăвăн-па	хăй-ĕн-пе, хăй-пе
В.	хам-ра	хăв-ăн-та	хăй-ĕн-че
Тух.	хам-ран	хăв-ăн-тан	хăй-ĕн-чен

Нумайлă хисеп.

Ят.	хамăр	хăвăр	хăй-сем
К.	хамăр-ăн	хăвăр-ăн	хăй-сен
Пар.	хамăр-а	хăвăр-а	хăй-сен-е
Т.	хамăр-а	хăвăр-а	хăй-сен-е
Пĕр.	хамăр-па	хăвăр-па	хăй-сем-пе
В.	хамăр-та	хăвăр-та	хăй-сен-че
Тух.	хамăр-тан	хăвăр-тан	хăй-сен-чен

82-мĕш задача. Паллă тунă местоименисене **хам, ху, хăй** местоименисемпе улăштарса çырăр.

Кам чи малтан чупса тухать? **Эпĕ** чупса тухатăп. **Санăн** юлташна ан хăварччăр. Ку кĕнеке **мана** кирлĕ. **Эсĕ** вăл журнала вуласах тух. Вăл çырăва **эсир** çырсах пĕтерĕр. Вăл çĕнтерӳсем пурте **пирĕн**.

8 §. Глаголсем

Япала мĕн тунине, унпа мĕн пулнине, вăл выртнитăнине, унăн ĕçхĕлне пĕлтерекен сăмаха глагол теççĕ.

Глаголсем сăпат, вăхăт тата хисеп тăрăх улшăнаççĕ. Сăпатсем виççĕ: пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш сăпат. Вăхăтсем виççĕ: хальхи вăхăт, пулас вăхăт, иртнĕ вăхăтсем. **Хальхи вăхăт** ĕç халĕ пулнине пĕлтерет: *çырать, вулать.* **Пулас вăхăт** ĕç малалла пулассине пĕлтерет: *çырĕ, вулĕ.* **Иртнĕ вăхăтсем** ĕç малтан тĕрлĕ вăхăтра пулнине пĕлтереççĕ: *çырнă, вуланă, çыраттăм, вулаттăм, çырчĕç, вуларĕç, çырнăччĕ, вуланăччĕ.*

Иртнĕ вăхăтсем чăваш чĕлхинче тăваттă: курса иртнĕ вăхăт, курмасăр иртнĕ вăхăт, хальхи умĕнчи вăхăт, иртнĕ умĕнчи вăхăт.

Курса иртнĕ вăхăт калаканни ĕçе хăй курнă пек калаканине пĕлтерет.

Курмасăр иртнĕ вăхăт калаканни ĕçе хăй курман пек каланине пĕлтерет.

Хальхи умĕнчи вăхăт ĕç калас умĕн пулнине е ĕç темиçе хут пулса иртнине пĕлтерет.

Иртнĕ умĕнчи вăхăт пĕр ĕç тепĕр ĕç тунă хыççăн пулнине пĕлтерет.

Глаголсем сăпатланни.

Хальхи вăхăт.

Пĕрреллĕ хисеп.	Нумайлă хисеп.
1. Эпĕ çыр-ат-ăп	Эпир çыр-ат-пăр
2. Эсĕ çыр-ат-ăн	Эсир çыр-ат-ăр
3. Вăл çыр-ать	Вĕсем çыр-аç-çĕ

Пулас вăхăт.

Пĕрреллĕ хисеп.	Нумайлă хисеп.
1. Эпĕ çыр-ăп	Эпир çыр-ăп-ăр
2. Эсĕ çыр-ăн	Эсир çыр-ăр
3. Вăл çыр-ĕ	Вĕсем çыр-ĕç

Иртнĕ вăхăтсем.

а) Курса иртнĕ вăхăт.

Пĕрреллĕ хисеп.	Нумайлă хисеп.
1. Эпĕ çыр-т-ăм	Эпир çыр-т-ăм-ăр
2. Эсĕ çыр-т-ăн	Эсир çыр-т-ăр
3. Вăл çыр-ч-ĕ	Вĕсем çыр-ч-ĕç

ă) Курмасăр иртнĕ вăхăт.

Пĕрреллĕ хисеп.		Нумайлă хисеп.	
1. Эпĕ		Эпир	
2. Эсĕ	} çыр-нă	Эсир	} çыр-нă
3. Вăл		Вĕсем	

б) Хальхи умĕнхи вăхăт.

Пĕрреллĕ хисеп.	Нумайлă хисеп.
1. Эпĕ çыр-атт-ăм	1. Эпир çыр-атт-ăм-ăр
2. Эсĕ çыр-атт-ăн	2. Эсир çыр-атт-ăр
3. Вăл çыр-ат-чĕ	3. Вĕсем çыр-ат-чĕ-ç

в) Иртнĕ умĕнхи вăхăт.

Пĕрреллĕ хисеп.	Нумайлă хисеп.
1. Эпĕ 2. Эсĕ } çыр-нă-ччĕ 3. Вăл	Эпир Эсир } çыр-нă-ччĕ Вĕсем

Глагол **хупă сасăпа** пĕтет пулсан, *хальхи вăхăтра* **ат-ет аффикс** хушăнать (çыр-ат-ăп—кил-ет-ĕп, çыр-ат-ăн—кил-ет-ĕн; çыр-ать—кил-ет); *хальхи умĕнхи вăхăтра* **атт-етт** аффикс хушăнать (çыр-атт-ăм—кил-етт-ĕм; çыр-атт-ăн—кил-етт-ĕн; çыр-ат-чĕ—кил-ет-чĕ).

Глагол **уçă сасăпа** пĕтет пулсан, *хальхи вăхăтра* **т** аффикс хушăнать (вула-т-ăп, вула-т-ăн, вулать); *хальхи умĕнхи вăхăтра*—**тт** аффикс (вула-тт-ăм, вула-тт-ăн, вула-т-чĕ).

Нумайлă хисепĕн 2-мĕш сăпатĕнче *хальхи вăхăтра* пĕр **т** пулать (çыра-т-ăр), *хальхи умĕнхи вăхăтра* икĕ **т** (**тт**) пулать (çыра-тт-ăр).

Курмасăр иртнĕ вăхăтра пур сăпатра та, пур хисепре те **нă-нĕ** аффикс хушăнать (çыр-нă, кил-нĕ).

Курса иртнĕ вăхăтра пур хисепре те **р** е **т** аффикс хушăнать виççĕмĕш сăпатра **т** вырăнне **ч** пулать (вула-рĕ, çыртăм, çыртăн, çыр-чĕ).

Хальхи умĕнхи вăхăтра 3-мĕш сăпатăн форминче **атт-етт-тт** аффикс вырăнне—**ат- ет-** т аффикссем пулаççĕ (çыр-ат-чĕ, кил-ет-чĕ, ĕçле-т-чĕç).

83-мĕш задача. Çак предложенисенчи глаголсене аялтан пĕр йĕр туртса тухăр, вĕсем хăш вăхăтра, хăш хисепре, хăш сăпатра тăнине кăтартса парăр.

Колхозри хĕрӳллĕ ĕç.

Колхозниксем паян хĕвел тухиччченех хире тухрĕç. Пурте хаваслă, пурин пичĕ çинче те хĕвел шевлисем выляççĕ. Иртнĕ эрнере çеç вĕсем улăхра утă çулатчĕç. Паян вĕсем тыră вырма тытăнчĕç.

Колхозра ĕç пигĕ ăнăçлă пырать, мĕншĕн тесен халь пур ĕçе те машинăпа ĕçлеççĕ. Комбайн тырра вырать, çапать, сăвăрать, сортлать.

Вагă çынсем комбайн ĕçленине курса питĕ тĕлĕнеççĕ.

— Ĕлĕк эпир кун пек машина нихăçан та курманччĕ. Мĕнпур ака-сухэ, уй-хир ĕçне хăрăк сухапуçĕпе тунă. Часах ак татах телейлĕ, савăнăçлă, тĕлĕнмелле вăхăтсем çитĕç, ун чухне

уй-хир ӗҫне тата пысӑкрах машинӑсем ӗҫлеме пуҫлӗҫ,—теҫҫӗ ваттисем.

84-мӗш задача. Ҫак предложенисенчи глаголсен вӑхӑчӗсене улӑштарса е иртнӗ умӗнчи вӑхӑтра, е хальхи умӗнчи вӑхӑтра туса лартӑр.

Тӗслӗх: *Вӑхӑт та ҫитсе килет. Вӑхӑт та ҫитсе килетчӗ.*

Ачасем вӗренӳ ҫулне хатӗрленеҫҫӗ. Кӗнекесене, тетрадьсене, ручкӑсене, перосене тахҫанах хатӗрлесе хунӑ. Вӑхӑт та ҫитсе килет. Кашни кунах ачасем шкула каймалли вӑхӑта кӗтсе тӑраҫҫӗ. Шкула каяс умӗн вӗренекен ачасен пухӑвӗ пулчӗ. Пухӑва ирттерме райҫутӗҫ пайӗн инспекторӗ пынӑ.

Пирӗн колхоз автомобиль туяннӑ. Ӑна паян колхозниксем хуларан илсе килчӗҫ. Ача-пӑчасем автомобиль тавра чупса ҫӳреҫҫӗ.

85-мӗш задача. Вула, итле, кай сӑмахсене вӑхӑтсем, сӑпатсем тӑрӑх улӑштарса тухӑр.

86-мӗш задача. Ҫак статьяна ҫырса илӗр, хальхи вӑхӑтри глаголсене пулас вӑхӑта куҫарса ҫырӑр.

Тӗслӗх: *Ҫулла эпӗ вӑрмана ҫӳрӗп.*

Ҫулла эпӗ вӑрмана ҫӳретӗп. Вӑрманти йывӑҫ-курӑксен пурӑнӑҫне сӑнатӑп. Вӑрманти чӗрчунсемпе интересленетӗп. Вӑрманти кайӑксен юррине итлетӗп. Вӑрмантан эпӗ яланах тӗрлӗ ҫулҫӑсем, хурт-кӑпшанкӑсем пухса килетӗп.

9 §. Хисеп ячӗсем.

87-мӗш задача. Ҫак предложенисенчи паллӑ тунӑ сӑмахсем мӗне пӗлтернине чухласа илӗр.

1. Совет Союзне **вунултӑ** союзлӑ республика кӗрет. 2. Чӑваш республикинче **ҫирӗм сакӑр** район, **ҫичӗ** хула. 3. Ҫулталӑкра **вуникӗ** уйӑх, уйӑхра **вӑтӑр** кун. 4. **Иккӗмӗш** пятилетка планне эпир ытлашшипех тултартӑмӑр, халь **виҫҫӗмӗш** пятилетка планне пурнӑҫласа пыратпӑр. 5. Пирӗн ялта кашни киле **икшер** хаҫат тивет.

Япаласен шутне, йӗркине пӗлтерекен сӑмахсен ушкӑнне хисеп ячӗсем теҫҫӗ.

Хисеп ячӗсем тӑватӑ тӗрлӗ пулаҫҫӗ: япала шутне пӗлтерекеннисем, япала йӗркине пӗлтерекеннисем, япалана валеҫнине пӗлтерекеннисем, япала вакне пӗлтерекеннисем.

Шут хисепӗсем **миҫе**? тесе ыйтӑнаҫҫӗ.

Тĕслĕх: *Пирĕн колхозра* ***ултçĕр*** *кил.*

Йĕрке хисепĕсем **миçемĕш?** тесе ыйтăнаççĕ.

Тĕслĕх: *Эпĕ списокра* ***саккăрмĕш*** *ача шутланатăп.*

Валеçў хисепĕсем **миçешер?** тесе ыйтăнаççĕ.

Тĕслĕх: *Паян* ***пилĕкшер*** *тетрадь илтĕмĕр.*

Вак хисепĕсем, шут хисепĕсем пекех, **миçе?** тесе ыйтăнаççĕ.

Тĕслĕх: *Мана* ***тăвата пиллĕкмĕш*** *пайĕ тиврĕ.*

Шут хисепĕсем.

Пĕрре, пĕр	вăтăр
иккĕ, икĕ, ик	хĕрĕх
виççĕ, виçĕ, виç	аллă
тăваттă, тăватă, тăват	утмăл
пиллĕк, пилĕк	çитмĕл
улттă, ултă, улт	сакăрвуннă, сакăрвунă, сакăрвун
çиччĕ, çичĕ, çич,	тăхăрвуннă, тăхăрвунă, тăхăрвун
саккăр, сакăр	çĕр
тăххăр, тăхăр	икçĕр
вуннă, вунă, вун	виççĕр
вунпĕр	тăватçĕр
вуниккĕ, вуникĕ, вуник	пилĕкçĕр
вунвиççĕ, вунвиçĕ, вунвиç	ултçĕр
вунтăваттă, вунтăватă, вунтăват	çичçĕр
вунпиллĕк, вунпилĕк	сакăрçĕр
вунулттă, вунултă, вунулт	тăхăрçĕр
вунçиччĕ, вунçичĕ, вунçич	пин
вунсаккăр, вунсакăр	миллион
вунтăххăр, вунтăхăр	миллиард
çирĕм	

Шут хисепĕсем пĕрререн вунна çитиччен, вуниккĕрен вунтăххăра çитиччен, сакăрвуннă тата тăхăрвуннă хисепсем икĕ формăллă пулаççĕ: тулли формăллă (пĕрре, иккĕ, виççĕ, вунулттă т. ыт. те), кĕске формăллă (пĕр, икĕ—ик, виçĕ—виç, вунвиçĕ—вунвиç т. ыт. те). Тулли формăра варринчи хупă сасă вăрăммăн илтĕнет, çавăнпа унта икĕ пĕрпек хупă саспалли çыраççĕ.

Йĕрке хисепĕсем шут хисепĕсен тулли форми çумне **мĕш** аффикс хушăннипе пулаççĕ: *пĕрремĕш, иккĕмĕш, çиччĕмĕш.*

Валеҫӳ хисепӗсем шут хисепӗсен кӗске форми ҫумне **шар, шер** аффикс хушӑннипе пулаҫҫӗ: *икшер, ҫичшер, вуншар.*

Вак хисепсен числителӗ шут хисепӗсен кӗске форминчен, знаменателӗ йӗрке хисепӗнчен пулать: *икӗ виҫҫӗмӗш, ултӑ саккӑрмӗш.*

88-мӗш задача. Ҫакӑнти ыйтусене хирӗҫ тулли ответсем ҫырӑр. Хисепсене сӑмахпа ҫырӑр.

Ҫулталӑкра миҫе уйӑх? Уйӑхра миҫе кун? Талӑкра миҫе сехет? Сехетре миҫе минута? Минутӑра миҫе секунда?

Сирӗн ялта миҫе кил? Колхозра миҫе бригада? Бригадӑра миҫе звено? Сирӗн класра миҫе ача вӗренет? Вӗсенчен миҫемӗш пайӗ отлично вӗренет, тата миҫемӗш пайӗ лайӑх вӗренет?

89-мӗш задача. Ҫак статьяна ҫырса илнӗ чух кашни хисеп ячӗ умне **миҫе?** е **миҫемӗш?** е **миҫешер?** ыйтусем лартӑр.

Тӗслӗх: *Эрнере (миҫе?) ҫичӗ кун.*

Пирӗн ҫемье.

Эпир, урам кӗтесӗнчен шутласа, виҫҫӗмӗш килте пурӑнатпӑр. Пирӗн ҫемье пысӑк: мӗнпурӗ ҫичӗ ҫын. Аслӑ пиччесем иккӗшӗ те инженер, вӗсем иккӗшӗ те вунултшар ҫул вӗреннӗ. Эпӗ хам халӗ тӑваттӑмӗш ҫул вӗренетӗп. Манӑн йӑмӑксенчен пӗри пӗр ҫул вӗренет, тепри виҫҫӗмӗш ҫул вӗренет.

90-мӗш задача. Ҫырса илнӗ чух хисеп ячӗсене сӑмахпа ҫырӑр.

Пирӗн шкулта 4 класс. Пӗрремӗш класра—44 ача, иккӗмӗшӗнче—38, виҫҫӗмӗшӗнче—36, тӑваттӑмӗшӗнче—29, пӗтӗм шкулӗпе—147 ача. Пирӗн класра арҫын ачасем—15, хӗрачасем—14. Пурте эпир пионер. Пирӗн отрядра виҫӗ звено. Пӗтӗм класӗпе отличниксем 10 ача, ударниксем—17, ыттисем вӑтам вӗренеҫҫӗ.

Кашни кунах 4 е 5 урок пулать. Кашни урок 45 минута пулать, пӗчӗк перемена—10 минута, пысӑк перемена 30 минута пулать.

91-мӗш задача. Ҫӳлте ҫырнӑ пекех хӑвӑр шкул ҫинчен пӗчӗк сочинени ҫырса парӑр, цифрисем урӑххисем пулччӑр.

92-мӗш задача. Ҫырса илнӗ чух, хисеп ячӗсене сӑмахпа ҫырӑр.

Ялхуçалăх ӳсĕмĕ.

Пирĕн социализмла ялхуçалăхĕ çултан çулах ӳссе пырать. 1933 çулта колхозсен тырпул акмалли çĕр площачĕ 75 миллион гектар пулнă. 1938 çулта вăл 92 миллион гектара çитнĕ. Единоличниксен акмалли çĕр площачĕ 15,7 миллион гектартан пуçласа 600 пин гектара çитиччен чакрĕ. 1938 çул тĕлне 18 миллион та 800 пин хресчен килĕ, тепĕр майлă каласан, пĕтĕм хресчен килĕсенчен 93,5 проценчĕ колхоз хуçалăхĕнче пĕрлешсе тăраççĕ.

Хисеп ячĕсем вĕçленни.

Хисеп ячĕсем япала ятне ăнлантарса параççĕ пулсан, вĕçленмеççĕ. Анчах, камăнлăх аффиксне йышăнсан е япала ятне тухсан, вĕçленме те пултараççĕ.

Шут хисепĕсем вĕçленни.

Ят.	пĕрре	иккĕ	пиллĕк
К.	пĕрре-н(ĕн)	икк-ĕн	пиллĕк-ĕн
Пар.	пĕрре-н-е	икк-е	пиллĕк-е
Т.	пĕрре-н-е	икк-е	пиллĕк-е
Пĕр.	пĕрре-пе	иккĕ-пе	пиллĕк-пе
В.	пĕрре-ре	иккĕ-ре	пиллĕк-ре
Тух.	пĕрре-рен	иккĕ-рен	пиллĕк-рен

3-мĕш сăпат аффиксне йышăннă хисеп ячĕсем вĕçленни.

Ят.	пĕри	виççĕшĕ	вуниккĕшĕ
К.	пĕри-н	виççĕшĕ-н	вуниккĕшĕ-н
Пар.	пĕр-не	виççĕш-не	вуниккĕш-не
Т.	пĕр-не	виççĕш-не	вуниккĕш-не
Пĕр.	пĕри-н-пе	виççĕшĕ-пе	вуниккĕшĕ-пе
В.	пĕри-н-че	виççĕшĕ-н-че	вуниккĕшĕ-н-че
Тух.	пĕри-н-чен	виççĕшĕ-н-чен	вуниккĕшĕ-н-чен

Йĕркç хисепĕсем вĕçленни.

Ят.	тăваттăмĕш(ĕ)	çиччĕмĕш(ĕ)
К.	тăваттăмĕш-ĕн	çиччĕмĕш-ĕн
Пар.	тăваттăмĕш-не	çиччĕмĕш-не
Т.	тăваттăмĕш-не	çиччĕмĕш-не
Пĕр.	тăваттăмĕш-пе	çиччĕмĕш-пе
В.	тăваттăмĕшĕ-н-че	çиччĕмĕшĕ-н-че
Тух.	тăваттăмĕшĕ-н-чен	çиччĕмĕшĕ-н-чен

93-мӗш задача. Ҫакӑнти хисеп ячӗсем мӗнле падежра тӑнине кӑтартса парӑр Ҫырса илнӗ чух хисеп ячӗсене сӑмахпа ҫырӑр.

Иккӗмӗш пятилетка ҫулӗсенче ССР Союзӗнче чӑн-чӑн культурӑллӑ революци туса ирттернӗ. Пуҫламӑш шкулсемпе вӑтам шкулсенче вӗренекенсем 21.300.000 ҫынтан 29.400.000 ҫынна ҫити ӳснӗ, ҫав вӑхӑтрах 5, 6, 7-мӗш классенче вӗренекенсен хисепӗ 15 хут ӳснӗ. Аслӑ шкулсенче вӗренекенсен хисепӗ 550.000 ҫынна ҫити ӳснӗ.

Тӑхӑрвуннӑн ҫурри—45. Ҫӗрӗн чӗрӗкӗ—25. 70-тен 50 кӑларсан 20 юлать.

94-мӗш задача. Ҫакӑнти ыйтусене хирӗҫ ответсем ҫырса парӑр, хисеп ячӗсене сӑмахпа ҫырӑр.

Ленин хӑҫан ҫуралнӑ? (1870-мӗш ҫулта, апрелӗн 22-мӗшӗнче). Вӑл хӑҫан вилнӗ? (1924-мӗш ҫулта, январӗн 21-мӗшӗнче). Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци хӑҫан пулнӑ? (1917-мӗш ҫулта, ноябрӗн 7-мӗшӗнче).

Сирӗн ялта миҫе кил? Сирӗн колхозра кашни бригадӑра миҫешер кил? Кӑҫал колхозра ӗҫкунӗ пуҫне тулӑ миҫешер кило тиврӗ?

10 §. Наречисем.

Хирте.

Колхозниксем (*хӑҫан?*) **ирех** хире тухрӗҫ. Вӗсем хирте (*мӗнле?*) **хавассӑн** ӗҫлеҫҫӗ. Машинӑсен шавӗ (*ӑҫта?*) **унта** (*мӗнле?*) хавассӑн янӑрать. Ушкӑнпа ӗҫ (*мӗнле?*) **ӑнӑҫлӑ** пулса пырать.

Ӗҫ паллине, ӗҫ мӗнле пулнине (*харӑс, сасартӑк, сиккипе*), **ӑҫта пулнине** (*унта, кунта, ҫавӑнта*), **хӑҫан пулнине** (*ыран, ӗнер, ир, авал*), **мӗн чухлӗ пулнине** (*нумай, сахал, кӑшт*) **пӗлтерекен улшӑнман сӑмахсене наречисем теҫҫӗ.** Наречисем глаголсене тата унтан пулнӑ формӑсене (причастисене е деепричастисене) ӑнлантарса параҫҫӗ.

Т ӗ с л ӗ х: Вӑл килтен (*мӗнле?*) **сасартӑк** чупса тухрӗ. Вӑрманта хурӑн ҫырлисем (*мӗнле?*) **лайӑх** пиҫсе ҫитнӗ. Эпир (*хӑҫан?*) **ӗнер** колхоз правленине кайрӑмӑр. Киле эпир (*мӗнле?*) **нумайӑн** таврӑнтӑмӑр. Пирӗн класра ачасем (*мӗнле?*) **отлично** вӗренеҫҫӗ.

95-мӗш задача. Ҫак предложенисенчи паллӑ тунӑ сӑмахсем мӗне пӗлтернине асӑрхӑр.

1. Хӗвел (хӑҫан?) **ҫулла** (ӑҫта?) **ҫӳле** улӑхать. 2. Шыв улӑхра (мӗнле?) **лӑпкӑн** юхать. 3. Кӗтӳҫӗ кӗтӗве (хӑҫан?) **ирех** хире кӑларчӗ. 4. Вӑл (мӗн пирки?) **савӑннипе** нимӗн калама та пӗлеймерӗ.

96-мӗш задача. Ҫак предложенисенчи наречисене глаголсемпе пӗрле ҫырса илӗр. Наречисем хыҫҫӑн скобкӑсем ӑшне вӗсен ыйтӑвӗсене кӗртсе лартӑр.

Эпир экскурсие кайма тахҫанах хатӗрленнӗ. Ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче тин хулана экскурсине кайрӑмӑр. Ҫул ҫинче эпир хавассӑн калаҫса пытӑмӑр. Эпир каяс ҫул ҫинче пысӑк пахча тӗл пулчӗ. Пахча варрипе пысӑках мар шыв лӑпкӑн юхса выртать. Ку Ленин ячӗпе тӑракан колхоз пахчи.

Учительница пире вӑл пахча ҫинчен ҫапла каласа пачӗ:

— Иртнӗ ҫулсенче кунта хирччӗ, халь ав улма пахчи илемлӗн ешерсе ларать. Ку колхоз стахановла ӗҫлет, хӑйӗн пуян та илемлӗ пурӑнӑҫне татах савӑнӑҫлӑ тӑвать. Ҫапла, ачасем, эпир халь ҫӗнӗ пурӑнӑҫ тӑватпӑр, ҫӗнӗлле ӗҫлетпӗр.

97-мӗш задача. Мӗнле? ӑҫта? хӑҫан? мӗн чухлӗ? тесе ыйтӑнакан наречиллӗ предложенисем тупса ҫырӑр.

Хӑшпӗр сӑмахсем предложенире паллӑ ячӗ те, наречи те пулма пултараҫҫӗ.

Тӗслӗх: 1. *Сӗтел ҫинче* ***вырӑсла*** *кӗнеке выртать.* 2. *Кӗнекере* ***илемлӗ*** *картинӑсем нумай.* 3. *Эпӗ* ***вырӑсла*** *пӗлетӗп.* 4. *Ачасем* ***илемлӗ*** *ҫыраҫҫӗ.*

Малтанхи икӗ предложенире **вырӑсла, илемлӗ** сӑмахсем паллӑ ячӗсем пулаҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем **кӗнеке** тата **картинӑсем** мӗнлине кӑтартаҫҫӗ.

Юлашки икӗ предложенире вырӑсла, илемлӗ сӑмахсем ӗҫ мӗнле пулнине кӑтартаҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсем наречисем пулаҫҫӗ.

98-мӗш задача. Малалли предложенисенчен паллӑ ячӗ те, наречи те пулакан сӑмахсене япала ячӗсемпе е глаголсемпе пӗрле ҫырса парӑр.

Заводра ӗҫ ӑнӑҫлӑ пырать. Ӑнӑҫлӑ ӗҫ рабочисене ҫӗнӗ вӑй парать. Пирӗн бригада яланах хастарлӑ ӗҫлет. Хастарлӑ ӗҫ хӑвӑртлӑхсене татах ӳстерет.

Хурҫӑпа тимӗр, вутра хӗрсен, хӗп-хӗрлӗ пулаҫҫӗ. Хӗп-хӗрлӗ тутӑр пирӗн алӑра. Паян ҫап-ҫутӑ кун. Ҫурхи шыв ҫап-ҫутӑ ҫутӑлса выртать.

Пирӗншӗн тырӑ пуҫтарса илме лайӑх кунсем тӑраҫҫӗ. Лайӑх ҫанталӑк колхозниксене савӑнтарать.

Наречисем паллă ачĕсенчен **ăн, ĕн** аффикссем хушăнса пулнă пулсан, çав паллă ячĕсен юлашки хупă сасси, вăл пĕччен тăрать пулсан, вăрăмланать.

Тĕслĕх: *Йăваш—йăвашшăн, симĕс—симĕссĕн, кăвак—кăваккăн.*

99-мĕш задача. Çакăнти предложенисене тетрадьсем çине çырса илĕр. Паллă ячĕсенчен ăн, ĕн аффикссем хушăнса пулнă наречисене тупса, вĕсене аялтан пĕр йĕрпе туртса тухăр.

1. Лăпкă çил йăвашшăн вĕрет. 2. Йытă хаяррăн вĕрсе ячĕ. 3. Ирхи тĕтре шуррăн курăнать. 4. Пионер ачасем умне тухрĕ те, хăйĕн сăмахне хăюллăн калама пуçларĕ. 5. Эпир Сталин юлташа хĕрӳллĕн саламлатпăр. 6. Путене питĕ вĕттĕн утать. 7. Пĕчĕккĕнех çулла çывăхарать. 8. Хĕвел хаваслăн кулса пăхать.

11 §. Хыççăмахсем.

Хĕвел пĕлĕт хыçне пытанчĕ.



Кĕтӳ ял патне çитнĕ.



Кĕнеке сĕтел **çинче** выртать.
Пукан сĕтел **айĕнче** ларать.
Парта сĕтел **хыçĕнче** тăрать.

Кĕтӳ вăрман **патĕнче** çӳрет.
Тетрадь сĕтел **ăшĕнче** выртать.
Доска сĕтел **умĕнче** тăрать.

Хыççăмахсем тесе вĕçленекен сăмах предложенири ытти сăмахсемпе мĕнле çыхăнура тăнине кăтартма çав сăмах хыççăн хушакан пулăшуллă сăмахсене калаççĕ.

Хыççăмахсем предложенире уйрăм член пулмаççĕ.

Тĕслĕх: *Шкул* ***тавра*** *акаци йывăçĕсем ӳсеççĕ. Пирĕн шкулпа* ***юнашар*** *ялсовет канцелярийĕ ларать. Шкул* ***çине*** *тимĕр витнĕ. Шкул* ***çинче*** *хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Колхозсем пирĕн шкул* ***çинчен*** *мухтаса калаçаççĕ.*

Ку предложенисенче ***тавра, юнашар, çине, çинче, çинчен*** сăмахсем **хыççăмахсем** пулаççĕ, вĕсен умĕнче тăракан ***шкул*** сăмах **япала ячĕ** пулать.

100-мĕш задача. Çак предложенисенчен япала ячĕсемпе хыççăмахсене çырса илĕр.

Пирĕн ял çывăхĕнчех пĕр пĕчĕк вăрман пур. Кашни çулах, çуллахи каникул вăхăтĕнче, эпир çав вăрмана уçăлса çӳреме

каятпӑр, вӑрман тӑрӑх савӑнӑҫлӑ юрӑсем юрласа, ҫырласем пуҫтарса ҫӳретпӗр. Вӑрман тавра карта тытса ҫавӑраннӑ, ҫавӑнпа унта выльӑхсем кӗмеҫҫӗ. Вӑрман витӗр автобус ҫулӗ тухса каять.

Пирӗн государство вӑрман ӗҫӗ ҫине тимлӗн пӑхать, вӑрмана лайӑх упрать.

Вӑрман урлӑ каҫнӑ чух, кайӑк сассисем кӑмӑла ҫӗклентерсе хаваслантараҫҫӗ. Вӗсен илемлӗ юррисене татах итлес килет.

Вӑрмантан пуҫне пирӗн ялӑн тата аслӑ улӑх пур. Улӑхра тӑрӑ шыв шӑнкӑртатса юхса выртать.

101-мӗш задача. Хӑвӑртан шухӑшласа предложенисем ҫырса парӑр. Ҫав предложенисенче япала ячӗсем хыҫҫӑн **ҫине, ҫинче, ҫинчен, урлӑ, тӑрӑх, витӗр, патне, патӗнче, патӗнчен** хыҫсӑмахсем пулччӑр.

102-мӗш задача. Хӑвӑр вулакан кӗнекери пӗр-пӗр калавран хыҫсӑмахсене ҫырса илӗр.

12 §. Союзсем.

Юр ирӗлчӗ те кайса пӗтрӗ. Хирсем, улӑхсем тата вӑрмансем ешерчӗҫ. Шывсем тулӑх юхса выртаҫҫӗ, анчах шыва кӗме ир-терех-ха. Вӑрманта питӗ илемлӗ, мӗншӗн тесен ҫурхи чечексем саралнӑ, кунӗ-кунӗпех кайӑксен юрри илтӗнет.

Пӗрйышши членсене е предложенисене ҫыхӑнтарма калакан сӑмахсене союз теҫҫӗ.

Союзсем уйрӑм пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем мар. Ҫавӑнпа та вӗсем предложенисенче уйрӑм член пулма пултараймаҫҫӗ. Вӗсем нимӗнле те улшӑнмаҫҫӗ.

Чӑваш чӗлхинче ҫакӑн пек союзсем пулаҫҫӗ: **та, те, тата, е, ҫапах, анчах, мӗншӗн тесен** т. ыт. те.

Ҫырура **ҫапах, анчах, мӗншӗн тесен** союзсем умӗн яланах запятая лартаҫҫӗ.

103-мӗш задача. Сулахай енчи предложенисемпе сылтӑм енчи предложенисене танлаштарса пӑхӑр. Сылтӑм енчи предложенисенче уйрӑм предложенисем мӗнле союзсемпе ҫыхӑнса тӑнине асӑрхӑр.

Союзсӑр предложенисем.	**Союзлӑ предложенисем.**
1. Хӗвел пӑхать, ҫанталӑк ӑшӑтать.	1. Хӗвел пӑхать те, ҫанталӑк ӑшӑтать.
2. Ачасем вӑрмана кайнӑ, унта кунӗпех ҫӳренӗ.	2. Ачасем вӑрмана кайнӑ та унта кунӗпех ҫӳренӗ.
3. Колхозниксем утта косилкӑпа, ҫавапа ҫулаҫҫӗ.	3. Колхозниксем утта косилкӑпа тата ҫавапа ҫулаҫҫӗ.
4. Паян ҫумӑр ҫӑвать-и, юр ҫӑвать-и?	4. Паян е ҫумӑр ҫӑвать-и, е юр ҫӑвать-и.

Союзсăр предложенисем.

5. Шпион тарасшăн пулнă, пирĕн красноармеецсем ăна часах çавăрса илнĕ.
6. Тăшман тапăнасшăн пулчĕ пулин те, пире нимĕн те тăваймарĕ.
7. Эпир тăшмансене çиййĕнчех çĕнтертĕмĕр, эпир вăйлă.

Союзлă предложенисем.

5. Шпион тарасшăн пулнă, анчах пирĕн красноармеецсем ăна часах çавăрса илнĕ.
6. Тăшман тапăнасшăн пулчĕ пулин те, çапах пире нимĕн те тăваймарĕ.
7. Эпир тăшмансене çиййĕнчех çĕнтертĕмĕр, мĕншĕн тесен эпир вăйлă.

Çутçанталăкри пулăмсем, халăх хушшинчи паллă ĕçсем пĕрин хыççăн тепри пулса пыраççĕ пулсан, вĕсене пĕлтерекен сăмахсене **та, те** союзсемпе çыхăнтараççĕ.

Тĕслĕх: *Çумăр çурĕ те, сывлăш уçăлчĕ. Ачасем каникулта лайăх каннă та кайран отлично вĕреннĕ.*

Тата союз предложенисенче пĕрйышши членсене пĕрпĕринпе çыхăнтарнине пĕлтерет.

Тĕслĕх: *Колхозниксем кĕркунне тырă выраççĕ тата авăн çапаççĕ.*

Е союз иккĕленнине пĕлтерет.

Тĕслĕх: *Е каятпăр, е килетпĕр.*

Те союз паллăмаррине пĕлтерет.

Тĕслĕх: *Ăмăртура те эпир мала тухатпăр, те вĕсем мала тухаççĕ.*

Анчах, çапах союзсем предложенисенчи сăмахсем шухăш енĕпе пĕр-пĕрне хирĕçленине пĕлтереççĕ.

Тĕслĕх: *Ачасем мулкач курнă, анчах вĕсем ăна тытайман. Иван питĕ хытă чупрĕ, çапах пире çитеймерĕ.*

Мĕншĕн тесен союз предложенири пĕр-пĕр ĕçе тепĕр ĕçпе çирĕплетсе каланине пĕлтерет.

Тĕслĕх: *Пирĕн колхозăн кăçал тырă питĕ лайăх пулчĕ, мĕншĕн тесен эпир ака-суха ĕçне аван тунă.*

104-мĕш задача. Çак предложенисенчи точкăсем вырăнне кирлĕ союзсене пĕлсе лартăр.

Пĕрре акăш, рак... çăртан лав туртса кайма килĕшнĕ. Питĕ нумай ĕçлерĕмĕр... ывăннине сисмерĕмĕр. Пирĕн пӳртре хăнкăла-таракан таврашĕ çук... эпир таса пурăнатпăр. Урамра курăк пур, ăна выльăх çимест... вăл питĕ шăршлă. Эпĕ хаçат илтĕм... вуласа тухаймарăм-ха. Хĕвел хĕлле те пăхать... хытă ăшăтмасть. Çӳрен лаша пысăках мар... пит вăйлă. Ачасем вăрмана мăйăр татма кайнă... мăйăрĕ пулса çитмен пулнă.

13 §. Татăксем.

Ыран экскурси пулать-и? Экскурсие мĕнле хатĕрсем илсе каймалла-**ши**? Эпир кайма хатĕрех тăратпăр. **Ăра** пирĕн экскурсие питĕ каяс килет-**çке-ха**. Пурин те пирĕн ытларах пĕлӳсем илес килет-**çке**.

Чăваш чĕлхинче **ши, çке, и, ха, та, те** йышши сăмахсем тĕл пулаççĕ. Вĕсене, хăйсене çеç уйрăммăн илсен, нимĕнле шухăша та пĕлтермеççĕ, анчах предложенире предложенисен е вĕсен членĕсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене палăртаççĕ.

Предложенисен е вĕсен членĕсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене палăртма калакан пулăшуллă сăмахсене татăксем теççĕ.

Ши, и, çке, ха татăксене кĕске йĕр урлă çыраççĕ; **та, те** татăксене уйрăм çыраççĕ.

Тĕслĕх: *1. Поезд Мускавран халех çитет-**ши**? 2. Эсир ĕнер киле часах çитрĕр-**и**? 3. Эх, ытла та аван-**çке** уçă сывлăшра! 4. Атте хуларан çитеймерĕ-**ха**. 5. Социализмла ăмăртура кăçал пирĕн отряд **та** мала тухрĕ. 6. Эпĕ **те** кăçал ачасемпе пĕрле экскурсие каятăп.*

105-мĕш задача. 12 предложени çырса парăр. Вăл предложенисенче **ши, и, çке, ха, та, те** татăксем пулччăр.

106-мĕш задача. Çак калава вуласа тухăр, унта мĕнле сăмахсенче татăксем пуррине асăрхăр.

Эпир кайăка кайни.

Ĕнер эпир Ванюкпа пĕрле кайăка кайрăмăр. Çул çинче Ванюк манран çапла ыйтать:

„Эсĕ, Петĕр, халиччен сунара (кайăка) кайнă-и?“—тет. Эпĕ ăна: „Кайнă“,—терĕм.

Вăрман хĕррине çитсен, пирĕн умри тĕм хыçĕнчен пĕр мулкач тухрĕ-тарчĕ. Куна курсан, эпир питĕ хĕпĕртерĕмĕр. Ванюк хăйĕн „Зорька“ йыттине вĕслетрĕ. „Зорька“ мулкач хыççăн ыткăнчĕ. Эпир те ун хыççăн чупрăмăр, анчах çитеймерĕмĕр.

Эпир мĕн чухлĕ чупмарăмăр-ши ун чух... Çапах мулкача тытаймарăмăр.

Юлашкинчен Ванюк: „Кун пек хам аларан эпĕ мулкача вĕçертменччĕ“,—терĕ.

Эпĕ ăна: „Ну, юрĕ-çке пĕррелĕхе, ыран каллех килĕпĕр“,—терĕм. Эпĕ каланипе вăл та килĕшрĕ. Вăл кун сунартан ахалех таврăнтăмăр.

14 §. Хутлă предложенисем.

107-мĕш задача. Сулахай енчи предложенисемпе сылтăм енчи предложенисене танлаштарса пăхăр, вĕсем хушшинче мĕнле уйрăмлăхсем пуррине асăрхăр.

Хутсăр предложенисем.

1. Эпĕ çыртăм. Вăл вуларĕ.
2. Петĕрпе Ванюк вăрмана кайнă. Унта вĕсем мулкач курнă.
3. Шурă юр ирĕлчĕ. Шыв кĕрлесе юхма тытăнчĕ.
4. Çуркунне колхоз пахчинче куккук авăтать. Ыйхăсăр шăпчăкĕ те юррипе килентерет.
5. Тăшмансем пирĕн çине тапăнасшăн. Вĕсем пирĕн Хĕрлĕ Çартан шикленсе тăраççĕ.
6. Кĕркунне çумăр час-часах çăвать. Курăксем пĕртте ÿсмеççĕ.

Хутлă предложенисем.

1. Эпĕ çыртăм, вăл вуларĕ.
2. Петĕрпе Ванюк вăрмана кайнă та, унта вĕсем мулкач курнă.
3. Шурă юр ирĕлчĕ те, шыв кĕрлесе юхма тытăнчĕ.
4. Çуркунне колхоз пахчинче куккук авăтать, тата ыйхăсăр шăпчăкĕ те юррипе килентерет.
5. Тăшмансем пирĕн çине тапăнасшăн, анчах вĕсем пирĕн Хĕрлĕ Çартан шикленсе тăраççĕ.
6. Кĕркунне çумăр час-часах çăвать, анчах курăксем пĕртте ÿсмеççĕ.

Предложенисем хутсăр тата хутлă пулаççĕ. Икĕ е темиçе хутсăр предложенирен пĕр хутлă предложени пулать. Хутсăр предложени пĕр пĕтĕм шухăша пĕлтерет.

Хутсăр предложенисем хутлă предложенисенче ***та, те, тата, анчах, çапах*** союзсемпе сыпăнса тăма пултараççĕ. ***Тата, анчах, çапах*** союзсем умне, ***та, те*** хыçне запятая лартса, хутсăр предложенисене пĕр-пĕринчен уйăраççĕ.

108-мĕш задача. Çак хутсăр предложенисенчен хутлă предложенисем тăвăр. Кирлĕ çĕре союзсем лартăр.

1. Хĕвел пăхнă. Сивĕ пулнă.
2. Çиçĕм çиçрĕ. Аслати авăтса ячĕ.
3. Эпир вăрмана кайрăмăр. Унта темĕн тĕрлĕ йывăç-курăксем куртăмăр.
4. Шăнкăрав шăнкăртаттарчĕ. Ачасем пурте класа кĕчĕç.
5. Пире вăрçă кирлĕ мар. Эпир тăшмана çĕмĕрсе тăкма яланах хатĕр.
6. Капиталистсем пирĕн çине хытă тарăхаççĕ. Эпир вĕсене çĕнтерсе пыратпăр.

109-мĕш задача. Çак предложенисене тетрадьсем çине çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартăр.

Тĕслĕх: *Тулта çуркунненĕн туйăнать, анчах çуркунне пулма вăхăт çитмен-ха.*

1. Тулта çуркунненĕн туйăнать, анчах...
2. Пире шкулта кино курма чĕнчĕç те, эпир...
3. Март уйăхĕ çитрĕ, çапах çанталăк...
4. Эпир пурте экскурсие кайма хатĕрлентĕмĕр, анчах...
5. Çулла çитрĕ те, пионерсем...
6. Кăçал шкулта пире валли каток туса пачĕç те, эпир...

110-мĕш задача. Çак предложенисене тĕплĕн вуласа тухăр. Вĕсенче мĕншĕн запятайăсем лартнине каласа парăр.

Вăйлă кăкăрăм çăмăллăн сывлать, ман йĕлтĕр пит çăмăл шăвать уй-хирте.

Çан-çурăм вĕри, алăсем пĕçерессĕ. Вăй-хал ман татах ӳсет, хушăнать.

Хĕрлĕ ялав çĕр çинче вĕл-вĕл туса вĕлкĕшет, çĕрĕк тĕнче вырăнне çĕнĕ тĕнче çитĕнет. Улшăнать хула, улшăнать уй-хир, улшăнать пĕтĕм этем пурăнăçĕ.

111-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илĕр, кирлĕ çĕре запятая лартăр.

1. Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать шăнкăрчă чĕппи шыв ĕçет. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче хĕвел пăхрĕ ăшăтса Силпи чăваш алĕнче юр ирĕлчĕ васкаса. Хĕвел анса пытанать Силпи ялĕ лăпланать.

Шавлать кĕрлет çурхи шыв хĕпĕртесе шыв юхать. Йывăçкурăк çурăлать вăрман илемлĕн курăнать.

2. Курăксем симĕсленчĕç чечексем усăннă пуçĕсене çĕклерĕç йывăçсен ешĕл çулçисем ирĕклĕн сарăлчĕç тавраллах ăшă сывлăш тавраллах илем—çаксем пурте пирĕн кăмăла хаваслантарса хăпартаççĕ.

15 §. Урăх çын сăмахĕллĕ предложенисем.

112-мĕш задача. Çак предложение тетрадь çине çырса илĕр. Вожатый каланă: **„Ыран звено занятинче В. И. Ленин биографине вĕренетпĕр"**,—тенĕ.

Ку предложенире **вожатый каланă** тата **тенĕ** сăмахсене кĕнекене çыраканни, авторĕ, каланă. Çавăнпа та ун пек сăмахсене ***автор сăмахĕсем*** теççĕ.

Ыран звено занятинче В. И. Ленин биографине

вĕренетпĕр сăмахсене автор каламан, вĕсене урăх çын (вожатый) каланă. Çавăнпа та ун пек сăмахсене ***урăх çын сăмахĕ*** теççĕ.

1. Урăх çын сăмахĕ автор сăмахĕ хыççăн е умĕн пулма пултарать.

Тĕслĕх: *„Пире кăçал лайăх вĕреннĕшĕн мухтав грамоти параççĕ",—тенĕ отличник.*

2. Урăх çын сăмахĕ автор сăмахĕсем варринче те пулма пултарать.

Тĕслĕх: а) *Отличник каланă: „Пире кăçал лайăх вĕреннĕшĕн мухтав грамоти параççĕ",—тенĕ.*

б) *Отличник: „Пире кăçал лайăх вĕреннĕшĕн мухтав грамоти параççĕ",—тесе каланă.*

Урăх çын сăмахĕллĕ предложенисенче чарăну паллисене тĕрĕс лартасси.

Тĕслĕх: *Пионер каларĕ: „Ленинпа Сталин ĕçĕшĕн кĕрешме яланах хатĕр!"—терĕ.*

„Эсĕ мĕн ятлă?"—тесе ыйтрĕ унтан пĕр юлташĕ.

Федя каланă:—„Паян эпир экскурсие каятпăр",—тенĕ.

1. Автор сăмахĕсем хыççăн, урăх çын сăмахĕ умĕн двоеточи (:) лартаççĕ.

2. Урăх çын сăмахне пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

3. Урăх çын сăмахĕ умĕн те, хыççăн та кавычка („ ") лартаççĕ.

4. Урăх çын сăмахĕ хыçĕнчи автор сăмахĕсене запятаййăпа тире лартса уйăраççĕ.

5. Урăх çын сăмахĕ ыйтуллă е кăшкăруллă пулсан, ун пек чух урăх çын сăмахĕ хыççăн запятая вырăнне ыйту палли е кăшкăру палли лартаççĕ.

113-мĕш задача. Çак предложенисене, урăх çын сăмахне автор сăмахĕсем вырăнне туса, каласа тухăр.

Тĕслĕх: *Çтаппан: „Манăн уçăмлă сĕнӳ пур",—тенĕ.*

„Манăн уçăмлă сĕнӳ пур",—тенĕ Çтаппан. „Юлташсем, кая ан юлăр, малта пыракансемпе танлашăр!"—тенĕ хаçатра. Партком секретарĕ каланă: „Колхозра сăтăр тăвакансене пĕтĕмпех тупрăмăр, вĕсене тĕппипех çапса салатрăмăр",—тенĕ. „Эсир ку ĕçе пĕр уйăхра пĕтерме пултарăр!"—тенĕ директор. Рабочисем ăна хирĕç çапла каланă: „Стахановла ĕçлесен, аванах пултаратпăр",—тенĕ. „Кам ĕçлемест, çавă ан çитĕр",—тенĕ В. И. Ленин.

114-мӗш задача. Ҫакӑнти урӑх ҫын сӑмахӗллӗ предложенисене тӗрӗс ҫырса парӑр: автор сӑмахӗсем хыҫҫӑн двоеточи лартӑр, урӑх ҫын сӑмахӗ хыҫҫӑн тирепе запятая е ыйту палли, е кӑшкӑру палли лартӑр.

Отряд вожатӑйӗ каланӑ Ыран кӳлӗ хӗррине шыва кӗме каятпӑр тенӗ. Ачасем автобус ҫине ларсанах хӗпӗртенипе кӑшкӑрса янӑ Кайрӑмӑр, кайрӑмӑр тенӗ. Пуху председателӗ каларӗ Пухӑва хупатӑп камӑн мӗн ыйтмалли пур тенӗ. Ыттисем пурте Хупас, хупас ыйтмаллисем ҫук терӗҫ. Вожатый пионерсене Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн кӗрешме хатӗр пулӑр тенӗ. Ачасем Яланах хатӗр тенӗ ӑна хирӗҫ.

Иккӗн е темиҫен калаҫнӑ чухне (диалогсенче) урӑх ҫын сӑмахӗсене кавычкӑсем вырӑнне тире лартса уйӑраҫҫӗ.

115-мӗш задача. Ҫак предложенисене вуласа тухӑр, мӗнле чарӑну паллисем лартнине асӑрхӑр.

— Рагим! каласа пар юмах?—ыйтатӑп эпӗ старикрен.
— Мӗн тума?—ыйтать Рагим, ман еннелле ҫавӑрӑнмасӑрах.
— Ахалех. Юрататӑп эпӗ санӑн юмахусене.
— Эпӗ сана йӑлтах каласа панӑ ӗнтӗ... Урӑх пӗлместӗп...

Хӑйне тата йӑлӑнтарасшӑн ҫапла калать вӑл. Эпӗ йӑлӑнатӑп.

— Итле,—эпӗ сана пӗр юрӑ каласа парам,—килӗшет Рагим. Манӑн авалхи юрра итлес килет, вара вӑл сӑмахсене юрланӑ пек тӑсса, юррине майлӑ кӗввине те кӑтартма тӑрӑшса, калама тытӑнать.

(*Максим Горький* „Сокол ҫинчен хунӑ юрӑ").

116-мӗш задача. Ҫак предложенисене, кирлӗ ҫӗре чарӑну паллисем лартса, ҫырса парӑр.

Вӑл тӑваткал-тӑваткал тӗртсе тунӑ кепкине кассӑн-кассӑн тӑвӑлланса килекен ҫил вӗҫтерсе каясран аллипе тытса хӑвӑрт ҫывӑхарса ҫитрӗ.

Такам районран килнӗ терӗ Нагульнов куҫӗсене хӗссе. Каччӑ ҫывӑхах ҫитрӗ те аллине кепка сӑмси ҫумне салтакла тытрӗ: Эсир ялсоветӗнчисем мар-и? Сире кам кирлӗ? Кунти ячейка секретарӗ е ялсовет председателӗ. Эпӗ ячейка секретарӗ, ку колхоз председателӗ. Пит те аван. (*М. Шолохов* „Уҫнӑ ҫерем").

117-мӗш задача. Икӗ пионер хӑйсен отрячӗ ҫинчен калаҫнӑ пек туса, пӗчӗк сочинени ҫырса парӑр. Пӗри ыйтӑвӗсене патӑр, тепри отвечӗсене калатӑр.

118-мӗш задача. Ҫак калаври урӑх ҫын сӑмахӗллӗ предложенисене тӗрӗс ҫырса парӑр: кирлӗ вырӑна двоеточисем, кавычкӑсем, запятайӑсем, тиресем лартӑр.

Икĕ ача.

Икĕ ача тавлашнă. Пĕри калать Эпĕ çак хурăн тăррине пĕр хăрамасăр хăпарса каятăп тет. Тепри калать Çук, пултараймастăн тет.

Ирхине хурăн çине хăпаратăп текенни патне тепри пынă та Çук ан хăпар, ӳксе аманăн тенĕ. Лешĕ чăнах та ăна итленĕ. Юрать хăпармастăп тенĕ.

16 §. Обращени.

***Укçине**, эсĕ паян шкула пыратăн-и?*
*Эсĕ, **Укçине,** паян шкула пыратăн-и?*
*Эсĕ паян шкула пыратăн-и, **Укçине**?*
***Ачасем**, айтăр паян вăрмана каятпăр?*
*Айтăр **ачасем** паян вăрмана каятпăр?*
*Айтăр паян вăрмана каятпăр, **ачасем**?*

Предложенисенче чĕнсе калакан сăмахсем пулма пултараççĕ. Ун пек чĕнсе калакан сăмахсене обращени теççĕ.

1. Обращени предложени пуçламăшĕнче пулсассăн, ун хыççăн запятая лартаççĕ.

Тĕслĕх: ***Юлташсем**, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешме яланах хатĕр пулăр!*

2. Обращени предложени варринче пулсассăн, ăна икĕ енчен те запятая лартса, уйăраççĕ.

Тĕслĕх: *Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешме, **юлташсем**, яланах хатĕр пулăр*!

3. Обращени предложени вĕçĕнче пулсассăн, ун умĕн запятая лартаççĕ, ун хыççăн, ăна епле каланине пăхса, е точка, е ыйту палли, е кăшкăру палли лартаççĕ.

Тĕслĕх: *Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешме яланах хатĕр пулăр, **юлташсем***!

119-мĕш задача. Çакăнти предложенисене çырса илĕр, унта обращени пулакан сăмахсене тупăр, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрăр.

Ачасем социализмла ăмăрту ялавне тата çӳлерех тытар
Социализмла ăмăрту ялавне ачасем тата çӳлерех тытар
Социализмла ăмăрту ялавне тата çӳлерех тытар ачасем

Федя паян йĕлтĕрпе ярăнма каятпăр
Паян Федя йĕлтĕрпе ярăнма каятпăр
Паян йĕлтĕрпе ярăнма каятпăр Федя

Ну Иван паян хирте мулкач куртăн-и
Ну паян Иван хирте мулкач куртăн-и
Ну паян хирте мулкач куртăн-и Иван

120-мĕш задача. Малалла предложенисенче обращени пулакан сăмахсене предложенисем варрине лартса çырăр.

Ачасем, айтăр хамăр класра Ленин кĕтесĕ тăвар.

Аппасем, аннесем, мартăн 8-мĕшĕ—пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен коммунистла кунĕ.

Мария Владимировна, ыран пире завода экскурсие илсе каятăр-и?

Ачасем, эпĕ вуласа тухнă кĕнекене хăçан сўтсе явăпăр?

Юлташсем, кам маларах чупса тухать?

Петя, сана сăмах паратăп.

Председатель, эсĕ пире хамăр ĕç çинчен каласа кăтартма сăмах пар-ха.

Иван, Макар, Микула, эсир ĕнер ăçта кайнăччĕ?

121-мĕш задача. Аялти предложенисене çырса илĕр. Кирлĕ çĕре запятая, точка, кăшкăру палли е ыйту палли лартăр.

1. Пăрăн пирĕн çул çинчен тăшман. 2. Ылханлă, выçăхнă чурасен мĕнпур тĕнчи харăсах тăр. 3. Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр. 4. Юлташсем çирĕп тăрăр: пирĕн халĕ юлашки татăклă çапăçу пырать. 5. Çўлерех çĕклен пирĕн хĕрлĕ ялав. 6. Рабочисемпе хресченсем Совет Союзĕн сыхлăхне çирĕплетĕр. 7. Салам сире паттăр коммунарсем. 8. Комсомолецсем çуракине вăхăтра ирттерессишĕн кĕрешер. 9. Тăр çĕклен ĕçхалăхĕ. 10. Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕ Коминтерн тавра пĕрлешĕр.

122-мĕш задача. Хăвăртан шухăшласа обращениллĕ предложенисем çырса парăр.

ВĔРЕННИНЕ АСА ИЛСЕ ÇИРĔПЛЕТМЕЛЛИ ĔÇСЕМ.

123-мĕш задача. Çак статьяна çырса илĕр. Подлежащисене пĕр йĕрпе, сказуемăйсене икĕ йĕрпе аялтан туртса паллă тăвăр.

Шушенское ялĕ.

Çĕпĕрте Шушенское ятлă ял ларать. Çак ялта ĕлĕк Ленин ссылкăра пурăннă. Ĕлĕк ку ял питĕ тĕттĕм пулнă. Хресченсем чухăн пурăннă.

Халь Шушенское нумай культураланнă. Ялта почта, больница, вăтам шкул, магазинсем пур. Ял варринчи площадьре Ленин памятникĕ ларать. Колхозниксем пуян та культураллă пурăнаççĕ.

124-мĕш задача. Статьяна вуласа тухăр. Кашни предложенире кĕçĕн членсене кăтартса парăр.

Пирĕн çĕршыв мĕн пысăкăш.

Мускавра çынсем халь кăна çывăрма выртаççĕ. Çав вăхăтрах, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче çынсем ыйхăран вăранаççĕ.

Совет Союзĕн кăнтăр пайĕнче çынсем пахчара чей ĕççе лараççĕ. Çав вăхăтрах çурçĕр енче ачасем юрпа пемелле выляççĕ. Çĕр те, кун та, хĕл те пирĕн çĕршывра пĕр вăхăтрах пулаççĕ.

Пирĕн çĕршыв пĕтĕм тĕнчери тип çĕрĕн улттăмĕш пайне йышăнса выртать. Тĕнчере ун пек пысăк çĕршыв урăх çук.

125-мĕш задача. Çак сыпăка çырса илĕр. Кирлĕ çĕре кăшкăру палли лартăр.

Пионерсемпе пионеркăсем совет шкулĕнче вĕренекенсем Пĕлўсем илсе пырăр, Ленин—Сталин ĕçĕшен кĕрешекенсем пулма, социализмлă тăван çĕршыва сыхлакансем пулма вĕренĕр Телейлĕ ачалăхшăн спасибо Сталин юлташа.

126-мĕш задача. Çак сăвва çырса илĕр. Ыйтуллă предложенисем хыççăн ыйту палли, кăшкăруллă предложенисем хыççăн кăшкăру палли, калуллă предложенисем хыççăн точка лартăр.

Амăшĕн ыйтăвĕ.

Призыв пулнă пўлĕме
кĕçĕ те каларĕ:
— Эс кулатăн-им пиртен,
çарĕç комиссарĕ

Е ман ывăл ырă мар
Эсĕ ху пĕлместĕн-им
Хĕрлĕ Çар çынни пулма
ма ăна илместĕн

Çук, итле-ха комиссар,
тепĕр май тусамччĕ
Ман юратнă ачама
çара йышăнсамччĕ

Ват çынна, мана, çакна
тўсме питĕ йывăр
Ан тив кайтăр вăл инçе,
вĕçтĕр çўллĕ, хăвăрт

Хăйĕн савнă çĕршывне
куç пек вăл сыхлатăр
Мĕнпур ирсĕр тăшмана
çаптăр та аркаттăр

Пар ăна эс çул-телей,
ан тив вĕçтĕр çўллĕ
Шантаратăп: ывăл ман
чи примерлă пулĕ.

127-мӗш задача. Ҫак статьяна вуласа тухăр. Статьяра тӗл пулакан хутлă сăмахсене ҫырса илӗр.

Пирӗн тăван ҫӗршыв.

Пирӗн тăван ҫӗршыв—Советлă Социализмлă Республикăсен Союзӗ. 1917-мӗш ҫултанпа пирӗн ҫӗршывра пӗтӗм власть ӗҫхалăхӗ аллинче. Пирӗн ҫӗршыври ӗҫҫыннисем хаваслă, телейлӗ, хӗн-хурсăр, пусмăрлăхсăр пурăнăҫпа пурăнаҫҫӗ. Коммунистсен партийӗпе унăн аслă ҫулпуҫӗ Сталин ӗҫхалăхне ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне ертсе пыраҫҫӗ.

128-мӗш задача. Ҫакăнта панă мăшăр сăмахсене кӗртсе, предложенисем тăвăр. Предложенисем пӗр-пӗринпе ҫыхăнса тăрса, „Колхозри пуян пурăнăҫ" темăна ҫутатса паччăр.

Тырă-пулă, апат-ҫимӗҫ, чăх-чӗп, хур-кăвакал, выльăх-чӗрлӗх, хаҫат-журнал, сăвă-юрăсем.

129-мӗш задача. Шурă-шурă, симӗс-симӗс, кая-кая йышши икӗ хут калакан сăмахсем тупăр та, вӗсене кӗртсе, предложенисем тăвăр.

130-мӗш задача. Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Япала ячӗсене аялтан йӗр туртса паллă тăвăр. Ҫӳле кӗскен кашни япала ячӗн падежне лартăр.

ят. п.

Тӗслӗх: *Пирӗн таврари ҫутҫанталăк питӗ пуян.*

Пирӗн таврари ҫутҫанталăк питӗ пуян. Ял ҫывăхӗнче вăрман, шыв пур. Шыв хӗррипе улăх тăсăлса выртать. Унăн сарлакăшӗ ҫур километр. Ҫырла пиҫсен, ҫынсем вăрмана ҫырла татма каяҫҫӗ. Ҫумăр хыҫҫăн кăмпа татма ҫӳреҫҫӗ. Уяр кунсенче ачасем шыва кӗреҫҫӗ. Пирӗн колхозăн шыв ҫине пӗчӗк гидростанци лартас ӗмӗт пур.

131-мӗш задача. Ҫак статьяна вуласа тухăр. Камăнлăх аффиксӗ йышăннă япала ячӗсене кăтартса парăр.

Унăн ячӗ.

Италире пӗр ватă кӗтӳҫӗн ҫемьинче ача ҫуралнă.

— Мӗнле ят парас тетӗн эсӗ ăна?—тесе ыйтнă ачан аслашшӗ ашшӗнчен.

— Унăн ячӗ Ленин пулать,—тенӗ ача ашшӗ савăнса.

Старик хăех ачана хула управленине илсе кайса ят ҫыртарасшăн пулнă.

— Мӗн ятлă хурас тетӗн ачуна?—тесе ыйтнă лере унтан.

Старик пӗрре ӳсӗрсе илнӗ те ҫапла каланă:

— Ашшӗ ӑна Ленин ят пачӗ,—тенӗ.

Хула управленин пуҫлӑхӗпе тухтӑр пӗр харӑсах кӗтӳҫӗ патнелле ҫавӑрӑнса тӑнӑ.

— Эсӗ те, санӑн ывӑлу та ухмаха ернӗ,—тесе вӑрҫма тытӑннӑ управлени пуҫлӑхӗ.

— Ун пек ят ниҫта та ҫук!—тенӗ.

Старик тӳрленсе тӑп тӑнӑ та, куҫӗсене хӗстеререх пӑхса ӑна хирӗҫ ҫапла тавӑрса хунӑ.

— Ман Антонио кашни вырсарникун хаҫат вулать, ҫав ята хаҫатра асӑнманни ку таранччен пӗр кун та пулман. Унӑн ятне Ленин тесе ҫырӑр,—тенӗ вӑл писарь ҫине пӑхса.

132-мӗш задача. Ҫак статьяна ҫырса илӗр, Паллӑ ячӗсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр. Ҫӳле кашни паллӑ ячӗн ыйтуне лартӑр.

Тӑрӑ пӗлӗтре тӑри савӑнӑҫлӑ юррине шӑрантарать. Анлӑ хирсенчен тарӑн ҫырмасене ҫурхи шыв васкаса юхса анать. Ҫамрӑк вӑрман чӗрӗлме пуҫларӗ. Вӑрманти кайӑксем иртен пуҫласа каҫчен юрлаҫҫӗ.

Колхозӑн тутӑ, мӑнтӑр лашисем акана хатӗр. Часах большевикла ҫураки пуҫланӗ. Хурҫӑ тракторсем колхоз хирӗсене тухӗҫ. Вӗсем мӑнтӑр ҫӗре пысӑк плугсемпе сухаласа ҫемҫетӗҫ. Анлӑ хирсенче хаваслӑ юрӑсем янӑрӗҫ.

133-мӗш задача. Ҫак сӑвва ҫырса илӗр. И аффикс йышӑннӑ паллӑ ячӗсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Колхоз лашисем.

Кил хушшинче лашасем
уҫӑлса ҫӳреҫҫӗ.
Мӑнтӑр ҫутӑ кӗлеткисем
куҫа илӗртеҫҫӗ.

Хури, кӑвакки, туррисем,
пур темӗн тӗсли те.
Ҫамрӑккисем, ваттисем,
пур юпах тихи те.

134-мӗш задача. Ҫак сӑвва вуласа тухӑр. Местоименисене кӑтартса парӑр, кашни местоимени хӑш сӑпатрине, мӗнле падежрине каласа парӑр.

Улпут хресченӗ.

Вӑл сӑмахсӑр пулнӑ та ӗҫчен,
ҫавӑнпа та ячӗ ун хресчен.
Вӑл ӗҫленӗ кунӗн-ҫӗрӗн,
такама пуйтарнӑ ӗҫӗпе.
Уринче ун пулнӑ ҫӑпата,
вӑл пуйтарнӑ выҫӑ-куҫ улпута.

Кунӗпе тарланӑ тыр вырса,
ачисем ун ларнӑ выҫӑхса.
Вӑл улпутшӑн тӑкнӑ тар-шурне,
анчах панӑ вӑл куланайне.
Пӳлминче ун пулнӑ тап-таса,
пурнӑҫӗ ун пулнӑ пит асап.

135-мӗш задача. Статьяна вуласа тухӑр. Статьяри глаголсене кӑтартса парӑр. Вӗсем хӑш вӑхӑтра, хӑш сӑпатра тӑнине каласа парӑр.

Ленин рабочисен массовкинче.

Эпӗ ун чухне Питӗрте ӗҫлеттӗм. Эпӗ Ленина малтанхи хут массовкӑра куртӑм.

Ун чухне ҫуркуннеччӗ. Эпир шывлӑ тарӑн канав патне пухӑнтӑмӑр. Хамӑрӑн йывӑр пурӑнӑҫ ҫинчен калаҫрӑмӑр. Хамӑр пурӑнӑҫа лайӑхлатасси ҫинчен сӳтсе яврӑмӑр. Ленин ҫапла каласа хучӗ:

— Пурӑнӑҫ лайӑхланасси патшана, помещиксемпе капиталистсене сирпӗтсен кӑна пулӗ,—терӗ. Вӑл питӗ ӑнланмалла калаҫатчӗ.

Сасартӑк полици сиксе тухрӗ. Эпир чӑлпар салантӑмӑр. Пӑхатпӑр: Ленин хыҫҫӑн городовой чупса пырать. Вара Фомин рабочи городовоя ҫапса ӳкерчӗ. Городовой канава персе анчӗ. Вӑл унта шапӑлтатса юлчӗ, эпир вӑрмана тартӑмӑр.

136-мӗш задача. Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Цифрӑсемпе ҫырнӑ хисеп ячӗсене сӑмахсемпе ҫырӑр. Хисеп ячӗсене пурне те аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Пирӗн ҫӗршывра 193 000 000 ытларах ҫын пурӑнать. Мӗн пурӗ 169 тӗслӗ халӑх. Чӑваш республикинче 1 077 614 ҫын шутланать. Чӑваш республикинчи пуҫламӑш, туллимар вӑтам тата вӑтам шкулсенче 200 000 яхӑн ача вӗренет. 100-шер ҫын аслӑ шкулсенче вӗренеҫҫӗ. Сталинла пятилетка ҫулӗсем хушшинче пирӗн республикӑра ҫитӗннисене 150 000 ҫын ытла хут вӗрентнӗ.

137-мӗш задача. Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Наречисене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Хыттӑн кӗрлеҫҫӗ пирӗн ҫӗршыври заводсенчи машинӑсем. Уҫҫӑн янӑраҫҫӗ паровоз гудокӗсем. Мӑнкӑмӑллӑн чупаҫҫӗ анлӑ хирсем тӑрӑх тракторсем, комбайнсем. Пур ҫӗрте те пурӑнӑҫ хаваслӑн, анлӑ Атӑл юхӑмӗн юхать. Паттӑрла Хӗрлӗ Ҫар ҫӗршыв чиккисене шанчӑклӑ сыхлать. Ҫӗршыва кирек епле тӑшман тапӑнас пулсан та, ӑна хаяррӑн ҫапса ҫӗмӗрӗ.

ТУПМАЛЛИ.

стр.

1 §. Предложенипе унӑн членӗсем 3
2 §. Калуллӑ, ыйтуллӑ, кӑшкӑруллӑ предложенисем . . . 6
3 §. Темиҫе подлежащиллӗ, сказуемӑйлӑ, пӗрйышши кӗҫӗн членлӑ предложенисем 12
4 §. Сӑмах 17
5 §. Япала ячӗсем 19
6 §. Паллӑ ячӗсем 35
7 §. Местоименисем 39
8 §. Глаголсем 41
9 §. Хисеп ячӗсем 44
10 §. Наречисем 48
11 §. Хыҫсӑмахсем 50
12 §. Союзсем 51
13 §. Татӑксем 53
14 §. Хутлӑ предложенисем 54
15 §. Урӑх ҫын сӑмахӗллӗ предложенисем 55
16 §. Обращени 58
Вӗреннине аса илсе ҫирӗплетмелли ӗҫсем 59

Редактор Н. Васянка.

Подписано к печати 26/VIII—41. НТ 6607 Печатных листов 4,0. Заказ № 287.
Тираж 12000 экз.

Отпечатано в типографии №1 Управления изд. и полигр. при СНК ЧАССР,
г. Чебоксары, Володарского, 5.

М. И. ЮРЬЕВ

ГРАММАТИКА ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА

ЧАСТЬ IV

ГОСИЗДАТ ЧАССР
ЧЕБОКСАРЫ • 1941